ПӖТӖМ ТӖНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПӖРЛЕШӖР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВӖ

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Чӑваш обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗпе Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

1953 ҫул Январь 1 кӗҫнерникун № 1 (8910)

35-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

Ҫӗнӗ ҫул ячӗпе салам, юлташсем!

Малалла, коммунизм патне!

Ленин—Сталин партийӗ ертсе пыракан совет халӑхӗ коммунизм строительствинче чаплӑ ҫӗнтерӳсем тунӑ 1952 ҫул иртрӗ, ҫӗнӗ тата пысӑкрах ҫитӗнӳсемпе ҫӗнтерӳсен ҫулӗ пуҫланчӗ.

Паян, ҫӗнӗ ҫула кӗнӗ кун, совет ҫыннисем хӑйсен мухтавлӑ партийӗ ертсе пынипе утса тухнӑ историллӗ кун-ҫул ҫине тепӗр хут ҫаврӑнса пӑхаҫҫӗ, кӗрешӳпе ӗҫри ҫитӗнӳсене палӑртаҫҫӗ. Совет халӑхӗ Сталин юлташ хӑйӗн «ССР Союзӗнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем» ятлӑ чаплӑран та чаплӑ произведенийӗнче тата Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗн решенийӗсенче палӑртнӑ аслӑ ӗҫсен программине пурнӑҫлама ҫӗнӗ вӑйсем пухать.

1952 ҫул чӑннипех аслӑ ҫӗнтерӳсен ҫулӗ пулчӗ. Вӑл ҫул коммунизмӑн аслӑ стройкисенчен пӗри—Атӑлпа Дон хушшинчи В. И. Ленин ячӗпе тӑракан канал ӗҫе кӗчӗ. Вӑл ҫул Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗпе совет халӑхӗн, ҫавӑн пекех пӗтӗм тӗнчери прогрессивлӑ этемлӗхӗн пурнӑҫӗнче пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан событи—партин XIX-мӗш съезчӗ пулса иртрӗ. 1952 ҫул совет халӑхӗпе демократиллӗ республикӑсенчи халӑхсем миршӗн, вӑрҫа хирӗҫ кӗрешес ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ ҫул пулчӗ. Сталин юлташ «Правда» корреспонденчӗпе калаҫнӑ чухне «Мире сыхласа хӑварас ӗҫе халӑхсем хӑйсен аллине илсен тата ӑна вӗҫне ҫитичченех хӳтӗлесе тӑрсан, мир сыхланса юлӗ т[illegible]тереклене» тесе каланӑ сӑмахсем м[illegible] ҫӗршывсенчи халӑхсене миршӗн кӗрешме ҫӗнӗ хӑватпа ҫӗклентерчӗҫ. Ҫӗнӗ ҫул умӗнхи кунсенче Сталин юлташ пӗтӗм тӗнче умӗнче тепӗр хут: Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе Совет Союзӗ хушшинче вӑрҫӑ пурпӗрех пулмалли ӗҫ тесе шутлама сук, пирӗн ҫӗршывсем малашне те мирлӗ пурӑнма пултараҫҫӗ, тесе каланӑ сӑмахсене мӗнпур тӳрӗ те ырӑ шухӑшлӑ ҫынсем хапӑл туса йышӑнчӗҫ.

1952 ҫул—Совет Союзне 1951—1955 ҫулсенче аталантармалли пиллӗкмӗш пилӗк ҫуллӑх план йышӑннӑ ҫул пулчӗ. Тӑваттӑмӗш пилӗк ҫуллӑх плана ӑнӑҫлӑ тултарни халӑх хуҫалӑхӗн мӗнпур отраслӗсене малалла ӳстерме, халӑхӑн материальнӑй пурнӑҫне, халӑх сывлӑхне сыхлас ӗҫе, халӑхӑн культурӑллӑ шайне ӳстерме кирлӗ ҫӗнӗ пилӗк ҫуллӑх план йышӑнма май пачӗ. Ҫӗнӗ пилӗкҫуллӑхра промышленность производстви 70 процент патне ӳсмелле Уйрӑмах производство хатӗрӗсем тӑвакан производство пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе вӑйланса пырать. Пиллӗкмӗш пилӗкҫуллӑхра Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗ йышӑннӑ тӑрӑх ҫӗршыв ытти пысӑк гидроэлектростанцисемпе пӗрле Атӑл ҫинче Шупашкар гидроэлектростанцине тума тытӑнать.

1952 ҫулта социализмлӑ ялхуҫалӑхӗнче пысӑк ҫӗнтерӳ тунӑ—Совет ҫӗршывӗ 8 миллиард пӑт тӗштырӑ туса илчӗ. Тырпул тухӑҫлӑхне, ҫавӑн пекех выльӑх-чӗрлӗх йышӗпе унӑн тухӑҫлӑхне ӳстересси малашне те ялхуҫалӑхӗ умӗнче тӑракан тӗп задача пулса юлать.

1952 ҫул культура строительствинче пысӑк ҫӗнтерӳсем тунӑ ҫул пулчӗ. Халӑх хуҫалӑхӗпе культура строительствинче тунӑ ҫитӗнӳсем пире пиллӗкмӗш пилӗкҫуллӑх вӗҫӗнче пысӑк хуласенче, ҫитес пилӗкҫуллӑхра пур ҫӗрте те пурне те вунӑ ҫул вӗрентес ӗҫе куҫма май параҫҫӗ. Ҫавӑнпа пӗрлех ҫӗршыв вӑтам шкулсенче политехниллӗ вӗренӗве пурнӑҫлама тытӑнать.

Пиллӗкмӗш пилӗк ҫуллӑх плана тултарни социализмран коммунизма аталанса пымалли ҫул ҫинче пысӑк утӑм туни пулать.

Пӗтӗм совет халӑхӗпе пӗрле Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисем те иртнӗ ҫулта пысӑк ҫитӗнӳсем турӗҫ. Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗпе Совет правительстви, Сталин юлташ куллен тӑрӑшнипе, аслӑ вырӑс халӑхӗ пулӑшнипе промышленность, ялхуҫалӑхӗ, халӑх культури куллен-кун вӑйланса пырать.

Ҫӗнӗ, 1953 ҫула, пысӑк малашлӑхсен ҫулне совет халӑхӗ ҫутӑ ӗмӗтпе кӗрет. Тӗллевсем уҫӑ, задачӑсем паллӑ—коммунизм строительствинче ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тумалла. Ҫӗнӗ ҫулти кашни кун коммунизм патне ҫитмелли кун-ҫула кӗскетмелли ӗҫсемпе пуян кунсем пулаҫҫӗ.

Аллӑ икӗ ҫул каялла, Коммунистсен партийӗн малтанхи никӗсӗсене хывнӑ тапхӑрта, ҫӗнӗ ҫул умӗнхи каҫ ҫамрӑк Иосиф Виссарионович рабочисем умӗнче ҫапла каланӑ:

— Акӑ ӗнтӗ тул ҫутӑлать. Часах хӗвел тухать Вӑхӑт ҫитӗ, ҫак хӗвел пирӗнщӗн ҫутатӗ.

Ҫак сӑмахсем пирӗн саманара пӗтӗмпех пурнӑҫа кӗрсе ҫитрӗҫ. Тӗнчен пысӑк пайӗнче коммунизм ялавӗ вӗлкӗшет. Аслӑ Совет Союзне пӗрлешнӗ тӑванла халӑхсем Сталинла Конституци хӗвелӗ айӗнче, пӗтӗм тӗнчери халӑхсене телейлӗ малашлӑх патне пымалли ҫула кӑтартса, ҫӗнӗ пурнӑҫ тӑваҫҫӗ

Ҫак ҫул ҫинче эпир пӗччен мар. «Халӗ, Китайпа Корейӑран пуҫласа Чехословакипе Венгри таран ҫӗнӗ «Ударнӑй бригадӑсем»—халӑх демократи ҫӗршывӗсем пулса тӑчӗҫ пулсан, — терӗ И. В. Сталин юлташ Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съездӗнче,—халӗ пирӗн партине кӗрешме ҫӑмӑлрах, тата ӗҫ те хаваслӑрах кайма пуҫларӗ».

Ҫӗнӗ ҫула совет ҫыннисем ӗҫҫынни депутачӗсен вырӑнти Совечӗсен суйлавне хатӗрленнӗ кунсенче кӗтсе илчӗҫ. Вырӑнти Советсен суйлавӗ—политикӑллӑ пысӑк кампани. Вӑл халӑхӑн ӑнлӑ массисем хутшӑннипе иртет. Суйлавсенче совет ҫыннисем Ленин—Сталин партине, аслӑ Сталина вӗҫӗмсӗр юратнине кӑтартаҫҫӗ. Вӗсем коммунистсемпе партире тӑманнисен сталинла блок кандидачӗсемшӗн сасӑласа Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн политикине ырласа йышӑннине кӑтартаҫҫӗ

Сталин юлташӑн «ССР Союзӗнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем» ятлӑ гениллӗ произведенийӗпе, Сталин юлташӑн съездра каланӑ сӑмахӗпе тата Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗн решенийӗсемпе хавхаланнӑ совет халӑхӗ ҫӗнӗ ҫула пиллӗкмӗш пилӗк ҫуллӑх плана срокчен тултарассишӗн тата иртерсе тултарассишӗн кӗрешес ӗмӗт-шухӑшпа кӗрет.

Пирӗн хӑватлӑ социализмлӑ Тӑван ҫӗршыв хӑйӗн вӑйӗсем чечекленсе ӳснӗ тапхӑрта пурӑнать, вӑл коммунизм строительствинче ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем патне пырать. Пирӗн ҫӗршывра коммунизмлӑ общество туса ҫитерме мӗн кирли пурте пур.

Совет Союзӗнчи халӑхсене коммунизм ҫӗнтерӗвӗ патне кӗрешӳре тӗрӗсленсе ҫирӗпленнӗ, ленинла-сталинла политикӑна пурнӑҫа ҫирӗп кӗртсе пыракан парти ертсе пырать.

Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе пирӗн ҫӗршывра социализм пӗтӗм тӗнчипе историллӗ ҫӗнтерӳ турӗ. Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе пирӗн ҫӗршывра ҫынна ҫын эксплуатацилессине ӗмӗрлӗхе пӗтернӗ Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе совет халӑхӗ пирӗн ҫӗршывра коммунизмлӑ общество тӑвассишӗн кӗрешет. Совет обществи хӑватлӑн малалла пырассине чарса лартма пултаракан вӑйсем тӗнчере сук.

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе, Аслӑ Сталин ертсе пынипе малалла, коммунизм ҫӗнтерӗвӗсем патне!

Ӗҫҫынни депутачӗсен вырӑнти Совечӗсен суйлавне ирттернӗ май ӗҫҫыннисем хушшинче лекцисем, докладсем, калаҫусем иртермелли

ТЕМАТИКА

(Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗн решенийӗсем ҫинчен лекцисемпе докладсем иртермелли тематика — «Советская Чувашия» тата «Коммунизм ялавӗ» хаҫатсенче 1952 ҫулхи декабрӗн 17-мӗшӗнче пичетлесе кӑларнӑ тематика ҫумне хушни)

1. Сталинла Конституци — социализм ҫӗнтернӗ ҫӗршывӑн Конституцийӗ.
2. Советлӑ, чӑн-чӑн халӑх демократи [illegible]уаллӑ демократирен малта тӑни.
3. Совет обществин моральлӗ-политик[illegible] пӗрлӗхӗ.
4. Ми[illegible]умай нациллӗ Совет государ[illegible] социализмлӑ нацисен ниҫам ҫ[illegible] туслӑхӗ.
5. [illegible] Союзӗнчи гражданӗсен пра[illegible] обязанноҫӗсем.
6. [illegible] Союзӗнчи суйлав системи— [illegible] демократиллӗ система.
7. [illegible] Союзӗнчи суйлаври коммунистсемпе партире тӑманнисен сталинла [illegible]
8. Ӗҫҫынни депутачӗсен вырӑнти Совечӗсем — чӑн-чӑн халӑх государство влаҫӗн органӗсем.
9. Чӑваш АССР-ӗнчи ӗҫҫынни депутачӗсен район, хула, ял тата поселок Совечӗсене суйламалли положени.
10. Вырӑнти Советсен суйлавне активлӑ хутшӑнасси — Совет ҫӗршывӗнчи суйлавҫӑсен хисеплӗ прави.
11. Вырӑнти Советсене суйлама тӑратнӑ пирӗн кандидатсем.
12. Суйлав кунне ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илер.

КПСС ЧӐВАШ ОБКОМӖН ПРОПАГАНДАПА АГИТАЦИ ПАЙӖ.

П. СИЗОВ художник ӳкерчӗкӗ.

Коммунизм ҫуттисем

Туркменири тӗп канала тӑвакансем ҫӗнӗ, 1953 ҫула ӗҫ планне чылай иртерсе тултарнипе кӗтсе илеҫҫӗ. Канал тумалли 1.000 километр тӑршшӗ вырӑнта ҫӗнӗ поселоксем ӳссе ларчӗҫ.

Строительсем Аму-Дарья шывне аяккалла пӑрса юхтармалли канал тӑвас тӗлӗшпе хӗрӳллӗ ӗҫлеҫҫӗ. Ку канала туса пӗтерсен Туркменири тӗп канала чавнӑ ҫӗрте ҫӗр ӗҫӗсем анлӑн сарӑлса каяҫҫӗ Кунта кӗске вӑхӑтрах ҫӗршер пин кубометр тӑпра чавса кӑларнӑ. Канал чавнӑ ҫӗрте экскаваторщиксем, хӑватлӑ земснарядсен командисем чапа тухрӗҫ. Атӑлпа Дон хушшинчи канала тунӑ ҫӗрте ӗҫленӗ Андрей Каньшин экскаваторщика пурте пӗлеҫҫӗ. Вӑл задание икӗ-виҫӗ хут иртерсе тултарса пырать. Экскаваторщиксен Василий Саморoков бригади, бульдозеристсен Василий Дуванов бригади, скреперистсен Николай Краснощеков бригади иртнӗ ҫулта пысӑк ҫитӗнӳсем турӗҫ. Ивӑрлӑхсене ҫӗнтерсе, механизаторсем 1953 ҫулти ҫуркунне тӗлне Аму-Дарья шывне аяккалла пӑрса юхтармалли канала туса пӗтерессишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Строительствӑри пӗтӗм коллективпа пӗрле 1952 ҫулта «ОМ-202» экскаватор экипажӗ те тӑрӑшса ӗҫлерӗ. Пирӗн бригада экскаваторпа икӗ хут ытларах ӗҫ тӑвакан пулчӗ.

Туркменири тӗп канал строителӗсен ӗҫӗ хисеплӗ те савӑнӑҫлӑ. Хамӑр ҫӗршывра коммунизмлӑ общество тӑвассишӗн кӗрешес ӗҫре малти ретре пулнишӗн эпир кашниех хӗпӗртесе савӑнатпӑр.

Кара-Кумри аслӑ стройка ҫуттисем — коммунизм ҫуттисем ытларах та ытларах ялкӑшса ҫутатаҫҫӗ.

Е. ПРОКОПЕНКО.
Туркменири тӗп канал строительствинчи бульдозерист.
Тахиа-Таш.

Плана срокчен тултарар

Партин XIX-мӗш съезчӗ пирӗн пурнӑҫри пысӑк событи пулчӗ. Съезд пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе панӑ директивӑсем совет халӑхӗ умне пысӑк та ответлӑ задачӑсем кӑларса тӑратрӗҫ. Вӗсене пурнӑҫлас тӗлӗшпе пирӗн те, пир-авӑр тӗртекенсен, хастарлӑ ӗҫлемелле.

Эпӗ хамӑр фабрикӑра лайӑх сортлӑ продукци туса кӑларассишӗн ӑмӑрту пуҫарса ятӑм, пӗтӗмпех пӗрремӗш сортлӑ пир-авӑр тӗртсе кӑларма пултӑм. Обуховӑри фабрикӑн пӗтӗм коллективӗ ҫак ӑмӑртӑва хутшӑнчӗ, 1953 ҫулта пӗрремӗш сортлӑ продукци 99,9 процент туса кӑларма (1952 ҫулта 99,85 процент пулнӑ), виҫҫӗмӗш сортлӑ продукци туса кӑларассине пӗтӗмпех пӗтерме йышӑнчӗ.

Ҫак пуҫарӑва СССР Ҫӑмӑл промышленноҫ министерствин коллегийӗ ырларӗ. Халӗ ку ӗҫ ҫӗршывri нумай предприятисенче анлӑн сарӑлса пырать.

Ҫӗнӗ ҫула кӗнӗ май эпӗ ҫапла шутлатӑп: сталинла ҫӗнӗ пилӗкҫуллӑхри виҫҫӗмӗш ҫулталӑкра ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тӑвӑпӑр.

Нина АМЕЛЬЧЕНКОВА,
Ленин ячӗпе тӑракан фабрикӑри ткачиха.
Обухово (Мускав облаҫӗ).

Аслӑ стройкӑра

Эпӗ тата манӑн юлташсем пиллӗкмӗш пилӗкҫуллӑхри чи пысӑк стройкӑсенчен пӗринче — Куйбышев гидроэлектростанци строительствинче ӗҫлеме телейлӗ пултӑмӑр. Халӗ Могутова сӑрчӗ ҫывӑхӗнче гидроэлектростанци ҫурчӗ валли питӗ пысӑк котлован чаваҫҫӗ. Ҫак вырӑнта икӗ ҫул каялла шырав ӗҫӗсене тӑвакансен шурӑ палаткисем ларнӑ Анатри шлюза тунӑ ҫӗрте халӗ ӗнтӗ 800 пин кубометр тӑпра чавса кӑларнӑ. Ҫав вырӑнта нумай та пулмасть-ха хӑмӑш ҫеҫ ӳснӗ кӳлӗ пулнӑ.

Строительствӑра питӗ пысӑк ӗҫсем тунӑ. Автомобильсемпе ӗҫлекенсем вуншар миллион тонна груз турттарчӗҫ. Гидромеханизаторсемпе экскаваторщиксем миллионшар кубометр тӑпра чавса кӑларчӗҫ. Строительсем пурӑнмалли ҫуртсемпе производство ҫурчӗсем ҫӗршер пин тӑваткал метр чухлӗ туса ӗҫе кӗртрӗҫ. Гидроузел тунӑ ҫӗрте скреперистсем, бульдозеристсем, монтажниксем, электросварщиксем, водолазсем тата ытти профессиллӗ строительсем питӗ нумай ӗҫ турӗҫ.

Эпӗ ертсе пыракан экскаваторщиксен бригади гидроузел шлюзӗсен системине тунӑ ҫӗрте ӗҫлет. Атӑл тӑрӑх пыракан пӑрахутсем Куйбышев тинӗсне ҫак вырӑнта тухмалла пулать. Малтанхи вӑхӑтра пирӗн экскаватор экипажӗ Анатри шлюз пулмалли вырӑнта котлован чавнӑ ҫӗрте ӗҫлерӗ. Ӗҫе срокчен туса пӗтерессишӗн социализмлӑ ӑмӑрту пуҫарса, эпир хамӑрӑн «Уралец» экскаваторпа гидроузелти экскаваторщиксем хушшинче чи пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлерӗмӗр — пӗр уйӑх хушшинче 120 пин кубометр тӑпра чавса кӑлартӑмӑр. Хӑшпӗр кунсенче бригада сменӑра самосвалсем ҫине 3.000—3.200 кубометр таран тӑпра тиерӗ. Анатри шлюз пулмалли вырӑнта ӗҫлесе пӗтернӗ хыҫҫӑн, пирӗн бригада Тури шлюз пулмалли вырӑнта ӗҫлеме тытӑнчӗ.

Пирӗн коллектив ҫулталӑк хушшинче миллион кубометр ытла тӑпра чавса кӑларчӗ. Кун чухлӗ тӑпрана турттарса кайма, чугун ҫул тӑрӑх турттарас пулсан, 1.000 поезд ытла кирлӗ пулнӑ пулӗччӗ.

Куйбышев гидроэлектростанцине срокчен туса пӗтерме пулӑшас тесе, пирӗн бригада 1953 ҫулта пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлеме, хамӑрӑн «Уралец» экскаваторпа Аслӑ Октябрь 36 ҫул тултарнӑ тӗле тата пӗр миллион кубометр тӑпра чавса кӑларма пулчӗ.

Василий КЛЕМЕНТЬЕВ,
Куйбышев гидроэлектростанцине тунӑ ҫӗрте ӗҫлекен «Уралец» экскаватор бригадирӗ.
«Куйбышевгидрострой».

Культурӑпа техника тӗлӗшӗнчен ӳссе пынӑ ҫулталӑк

Эпӗ хамӑн бульдозерпа Днепр айлӑмӗнчи халиччен никам чавса курман ҫӗре ытти юлташсенчен малтан чавма тытӑнтӑм. Коммунизмӑн аслӑ стройкинче ӗҫлесе, эпӗ пысӑк опыт пухрӑм. Ҫак опыт мана бульдозерпа стахановла ҫӗнӗ меслетпе ӗҫлеме пулӑшрӗ. Эпӗ Аслӑ Октябрь 35 ҫул тултарнӑ тӗле тӑватӑ ҫулталӑк нормине тултартӑм.

1952 ҫул культурӑпа техника тӗлӗшӗнчен ӳссе пынӑ ҫулталӑк пулчӗ. Юлташсемпе пӗрле эпӗ те ҫӗнӗ техникӑпа лайӑххрах усӑ курма вӗренсе ҫитрӗм.

Пӗтӗм совет халӑхӗпе пӗрле 1953 ҫула ӗҫре тата пысӑкрах ҫитӗнӳсем тӑвассишӗн кӗрешме хатӗр тӑнипе кӗтсе илетӗп. Стройкӑра Каховка гидроэлектростанцине срокчен ҫулталӑк малтан ӗҫе кӗртессишӗн ӑмӑрту сарӑлса кайрӗ. Эпӗ ҫӗнӗ ҫулта тухӑҫлӑрах ӗҫлеме график турӑм. Шутласа пӑхнӑ тӑрӑх, пиллӗкмӗш ҫулталӑк нормине манӑн 1953 ҫулхи майӑн 1-мӗшӗ тӗлне тултармалла. Эпӗ, тата тухӑҫлӑрах ӗҫлесе, ҫак пиллӗкмӗш ҫулталӑк нормине мартӑн 1-мӗшӗ тӗлне тултарма шут тытрӑм. 1953 ҫулхи тепӗр 10 уйӑх хушшинче пилӗк ҫул хушшинче тумалли ӗҫе пурнӑҫлама шутлатӑп.

Халӗ Каховка гидроэлектростанцине тунӑ ҫӗрте мӗнле ӗҫлени ҫинчен кӗнеке ҫыратӑп. Тепӗр ик-виҫӗ уйӑхран ку кӗнекене пичетлӗме Техиздата парӑтӑп.

Иван МАСТЕРОВ,
Каховка гидроэлектростанци строительствинчи бульдозерист.
Новая Каховка.

Ҫӗнӗ ҫулта ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тӑвӑпӑр

Пирӗн крайри ялхуҫалӑхӗнче ӗҫлекенсем уйрӑм лаптӑксем ҫинче пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илме вӗренсе ҫитрӗҫ. Вӗсем, ҫӗнӗ техникӑпа хӗҫпӑшаллански, акмалли пӗтӗм ҫӗр ҫинче пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илессишӗн кӗрешме тытӑнчӗҫ. Иртнӗ ҫулта пирӗн край кӗрхи тулӑ пысӑк тухӑҫлӑ туса илчӗ, кун пек пысӑк тухӑҫлӑ тырӑ халиччен нихҫан та пулманччӗ.

Тырӑ, хлопчатник, рис, табак тата ытти культурӑсем туса илме ӗҫ вӑйӗ расходлани чакрӗ. Ку вӑл машинӑсемпе пӗлсе усӑ курнинчен килет.

Хамӑр ӗҫри тӗслӗхсене илсе кӑтартатӑп. Пирӗн трактор бригади Курганински районӗнчи Ленин ячӗпе тӑракан колхозри Андрей Каменев ертсе пыракан уй-хир бригадипе туслӑ ӗҫлет. Удобренисем кӑларассине, уй-хирсене тасатассине, тырпула шӑварассине, итемсем ҫинче тырӑ тасатассине тата ытти ӗҫсене механизацилесе, уй-хир бригадинчи чылай колхозниксене эпир ӗҫрен пушатрӑмӑр, вӗсем халӗ урӑх ӗҫсене тӑваҫҫӗ. Кӗрхи тулӑ тата урпа кашни гектартан 160-шар пӑт туса илнӗ. Кашни гектар ҫӗре ӗҫлеме плана пӑхнинчен 6 тенкӗ те 31 пус йӳнерехе ларчӗ.

Ҫӗнӗ ҫулта эпир кашни гектартан 200-шер пӑт тырӑ туса илессишӗн, ялхуҫалӑх ӗҫӗсен хакне йӳнетессишӗн, ҫӗр ӗҫӗнчи мӗнпур ӗҫсене пӗтӗмпех механизацилессишӗн кӗрешӗпӗр.

Иван ШАЦКИЙ.
СССР Верховнӑй Совет депутачӗ, Михайловски МТС бригадирӗ.
Михайловски станици, Краснодар крайӗ.

Атӑлпа Урал хушшинчи канала вӑхӑтра туса пӗтеретпӗр

1952 ҫулхи майӑн 21-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Атӑлӑн сулахай ҫыранӗнче, Осаднӑй ҫырми районӗнче «Уралец» ятлӑ икӗ экскаватор ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Ҫав экскаваторсенчен пӗринпе сменӑри машинист Виктор Герасименко, тепӗр экскаваторӗпе эпӗ ӗҫленӗ. Пирӗн ҫак икӗ экскаватор Атӑлпа Урал хушшинчи 600 километр тӑршшӗ пысӑк канал пуҫланакан вырӑнта пӗрремӗш кубометр тӑпра чавса кӑларнӑ.

Унтанпа ҫичӗ уйӑх ытла иртрӗ. Халӗ ӗнтӗ экскаваторщиксем Осаднӑй ҫырми патӗнчен 5 километрта ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсен хыҫӗнче канал шывӗ юхса тӑмалли тарӑн ҫырма курӑнса выртать. Каспи тинӗсӗ ҫывӑхӗнчи ҫанталӑк типӗ тӑнин сиенне пӗтерес, ку вырӑнта ҫанталӑка улӑштарас тӗлӗшпе Атӑлпа Урал хушшинчи уй-хире шӑвармалли пысӑк канал калама сук паха пуласcине эпир лайӑх ӑнланатпӑр. Ҫак каналти шывпа халиччен усӑ курман 5 миллион гектар ҫӗре шӑварса тӑмалла тата унта шыв илсе пымалла пулать. Канал тӑрӑх шыв пырса тӑма тытӑнсан, ҫак аслӑ крайра пурнӑҫ чечекленме пуҫлать.

Канал чавма пуҫланӑ кунранпах эпӗ машинӑпа пысӑкрах тухӑҫлӑхпа ӗҫлеме тӑрӑшатӑп. «Уралец» экскаватор курки кашни ӑсмассерен виҫӗ кубометр ҫӗр чавса илет. Техникӑллӑ паспорт тӑрӑх, экскаватор куркипе тӑпра ӑсса илме тата ӑна хӑпартса кирлӗ вырӑна тӑкма мӗн пурӗ 28 секунд кирлӗ.

Экскаваторпа ӗҫлемелли техникӑнӑ тӗплӗ вӗренни вӑхӑтпа перекетлӗрех усӑ курма май пачӗ. Халӗ ӗнтӗ эпӗ ӗҫлекен экскаватор тӑпра ӑсса илес тата ӑна хӑпартса кирлӗ вырӑна тӑкас ӗҫе 28 секундра мар, 20,4 секундра туса пырать. Норма тӑрӑх экскаваторпа сменӑра 1.400 кубометр тӑпра чавса кӑлармалла пулсан, эпӗ кашни сменӑра 3,5 пин кубометр тӑпра чавса кӑларатӑп. Эпӗ сменӑра 3.760 кубометр тӑпра чавса кӑларни те пулнӑ. Ку вӑл «Уралец» экскаваторпа хамӑр ҫӗршывра чи пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлени пулса тӑрать. Экскаваторщиксем хушшинче вӑйлӑ ӑмӑрту сарӑлчӗ. Ӑмӑртса ӗҫлекен нумай экскаваторщиксем сменӑра 3-шер пин кубометр тӑпра чавса кӑларни час-часах пулать.

Икӗ уйӑх каялла манпа юнашар ӗҫлекен «Уралец» экскаваторпа Атӑлпа Дон хушшинчи канала тунӑ ҫӗрте ӗҫленӗ паллӑ экскаваторщик Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗ Дмитрий Алексеевич Слепуха ӗҫлеме пуҫларӗ. Вӑл пуҫарнипе кунта механизмсемпе комплекслӑ усӑ курассине организацилерӗҫ. Вӑл экскаваторпа пӗр уйӑх хушшинче 150 пин кубометр тӑпра чавса кӑларма пулчӗ (план тӑрӑх 80 пин кубометр чавса кӑлармалла).

Ҫак пуҫарӑва эпир пурте ырласа йышӑнтӑмӑр. Хамӑр ӗҫлекен пӗтӗм участокра комплекслӑ бригада тума тӑрӑшатпӑр. Малта пыракан ӗҫ меслечӗсемпе усӑ курса, Атӑлпа Урал хушшинчи канала палӑртнӑ срокра туса пӗтерӗпӗр. Ҫакна пурнӑҫлама май пуррине эпир ҫирӗп шанса тӑратпӑр.

Иван НЕТАЕВ,
613-мӗш номерлӗ «Уралец» экскаваторӑн старши машинисчӗ, «Сталинградгидрострой».
Сталинград.

Пирĕн тĕллев — коммунизм

Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод коллективĕ çĕнĕ çула Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илчĕ. 1952 çулта пирĕн завод, çĕршыври пĕтĕм промышленность пекех, производствăна аталантарас тĕлĕшпе пысăк ӳсĕмсем турĕ.

Аслă çулпуç тата учитель И. В. Сталин юлташ кăтартăвĕсене, Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви йышăннă решенисене пурнăçласа, социализмлă ăмăртăва вăйлатса пырса, пирĕн завод коллективĕ иртнĕ çулхи производство планне ăнăçлă тултарчĕ. Завод продукци туса кăлармалли плана пĕтĕмĕшпе декабрĕн 16-мĕшĕ тĕлне, таварлă продукци туса кăлармалли плана—декабрĕн 24-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ. Пур цехсем те производство заданийĕсене пурнăçларĕç. Уйрăмах виççĕмĕш сборочнăй, штамповочнăй тата механически цехсем лайăх ĕçленине палăртас пулать. Асăннă цехсен начальникĕсем П. Пестряков, А. Кудряшов тата И. Княжевский юлташсем, цехсенчи парторганизацисемпе пĕрле, производство культурине ӳстерессишĕн, техникăна тухăçлă ĕçлеттерессишĕн, рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен пусăрулăхĕпе пултарулăхне вăйлатса пырассишĕн тимлĕ кĕрешеççĕ.

Государство заданийĕсене чыслă пурнăçласа пырассишĕн цехсемпе участоксем хушшинче социализмлă ăмăрту анлă сарăлнă. Нумай цехсемпе участоксем çулталăкри программăна срокчен пурнăçларĕç.

1952 çулта завод коллективĕ çĕршыври электростанцисем, металлурги завочĕсем, шахтăсем, халăх хуçалăхĕн ытти предприятийĕсем валли кăткăс аппаратсем туса кăларас тĕлĕшпе нумай тăрăшрĕ. Партипе правительство коммунизмăн сталинла аслă стройкисем валли электрич[illegible] оборудованийĕ туса хатĕрлеме шан[illegible]нăшăн пирĕн коллектив савăнса хĕпĕртет. Атăлпа Дон хушшинчи В. И. Ленин ячĕпе тăракан каналпа Куйбышев гидростанцине тăвакансен заказĕсене срокчен пурнăçларăмăр.

Пирĕн завод туса кăларакан япаласене çĕршыври нумай предприятисемпе стройкăсем пĕлеççĕ. Коллектив завод маркине, чысне пĕрмаях çӳлте тытассишĕн кĕрешет. Рабочисем, инженерсемпе техниксем продукци пахалăхне лайăхлатассине хăйсен чи пысăк та ответлă тивĕçĕ тесе шутлаççĕ.

Коллективăн политикăллă активлăхĕпе ĕçри хастарлăхĕ ӳссе пынине кăтартакан тĕслĕхсем нумай. Чылай рабочисем технологи процесне çĕнетсе лайăхлатмалли, материалсене перекетлемелли, шалти резервсемпе туллин усă курмалли рационализаторла сĕнӳсем параççĕ. Пĕтĕм коллектив ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн ырми-канми тăрăшать. Халĕ заводра ĕç тухăçлăхĕ, 1948 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут пысăкрах.

1952 çулăн пĕрремĕш çурçулĕнче пирĕн завод ăнăçлă ĕçлеймерĕ. Пĕтĕм коллектив социализмлă ăмăртăва хутшăнни, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пыни, техникăна лайăх ĕçлеттерни виççĕмĕшпе тăваттăмĕш кварталсенче хамăр парăма татма, Тăван çĕршыв валли планран иртерсе чылай продукци туса кăларма май пачĕç.

Заводри паллă стахановецсен паха ĕçне СССР Электропромышленность министерстви пысăка хурса хакларĕ. Механически цехри Шеронова юлташ ертсе пыракан бригадăна тăватă квартал хушшинче министерство пысăк пахалăхлă продукци туса кăларакан бригада ятне пама йышăннă. Бригада членĕсене «Социализмлă ăмăрту отличникĕсем» ятлă значоксем тата преми панă.

Паллă стахановецсем Королев, Мильман, Мищенко, Вахтеров юлташсем тата ыттисем те ик-виç çулхи ĕç нормине тултарчĕç. Атăлпа Дон хушшинчи канал заказĕсене пурнăçланă чухне уйрăмах Курбатова тата Митрофанова слесарьсем паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Çавăншăн вĕсем правительство наградине илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Çĕнĕ çулта завод коллективĕ умĕнче ĕç тухăçлăхне тата ытларах ӳстерес, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетес, аппаратсен пахалăхне лайăхлатас, материалсемпе электроэнерги перекетлес задача тăрать. Кăçал çĕршывăн чыслă та ответлă заданине—Куйбышев гидростанцийĕ валли çĕнĕ йышши изделисен конструкцийĕсене шухăшласа кăларас тата туса кăларас ĕçе пурнăçламалла.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историллĕ решенисемпе, съездра И. В. Сталин юлташ тухса каланă сăмахпа, аслă çулпуçăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем», ятлă гениллĕ произведенийĕпе хавхаланнă завод коллективĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана срокчен тата иртерсе тултарĕ.

А. ЯКУНИН,
Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод директорĕ.

Çĕнĕ вăй-хăватпа

Пĕрремĕш пилĕкçуллăхри çитĕнӳсемпе хавхаланса М. Горький çапла çырнă: «Эпир виçесĕр фантазипе чăн пурнăçри чăнлăх хушшинчи пушă вырăн ĕненмелле мар пысăк хăвăртлăхпа кĕскелсе пынă саманара пурăнатпăр».

Вăл вăхăтра çĕнĕ стройкăсем тин кăна çĕкленсе пынă-ха. Ун чухнехи анлă строительствăна вăл вăхăтчен истори курман.

Халĕхи строительствăна, паллах, пĕрремĕш пилĕкçуллăхри ĕçсемпе танлаштарма çук. Халĕ техника та, çав техникăпа ĕçлекен çынсем те урăх. Сăмах май асăнсан, хăватлă техникăна шăпах Горькине хавхалантарнă гигантсем парса тăраççĕ. Çав тери пуян техникăпа пуянланнă совет çыннисем ĕлĕк ĕмĕр хушши хăратса тăнă улăпла ĕçе те юмахри пек кĕске вăхăт хушшинче тăваççĕ.

Пирĕн умра тата тĕлĕнмелле пысăк ĕçсем тăраççĕ. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ коммунизм строительствин анлă программине палăртрĕ. Çĕнĕ пилĕкçуллăхра тума тытăнмалли пысăк стройкăсем хушшинче Атăл çинчи Шупашкар гидроэлектростанцийĕ те пур.

1952 çул историне паха, пысăкран та пысăк ĕçсемпе кĕрсе юлчĕ. Коммунизмăн пĕр пысăк стройки — Атăлпа Дон хушшинчи канал ĕçе кĕчĕ. Коммунистсен мухтавлă партийĕн XIX-мĕш съезчĕ пулса иртрĕ. Съезд йышăннă историллĕ решенисем, çулпуç И. В. Сталин юлташ каланă сăмах совет çыннисен хастарлăхне нихçанхинчен те ытларах çĕклерĕç. Съезд кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлассишĕн ĕççыннисем ырми-канми тăрăшаççĕ. Ку пилĕкçуллăхра сĕтел-пукан кăларассине виçĕ хутран кая мар ӳстерме палăртнă. Çак задачăна ăнăçлă пурнăçласси пирĕн комбинатран та сахал мар килет. Комбинат коллективĕ умра тăракан задачăсене пурнăçлама тимлĕ хатĕрленет. Ĕç ăнăçлăхне социализмла ăмăртăвăн йышлă формисене анлă сарса пыни, кашни рабочи валли тухăçлă ĕçлеме паха майсем туса пани татса парать. Пирĕн цехра 12 бригада паха продукци çеç туса кăларать.

Йышăннă обязательствăна пурнăçласси рабочисен йăлине кĕнĕ. Пирĕн цехри чылай рабочисем пĕлтĕр 1,5—2 çулхи нормăна тултарнă, хăшпĕрисем тата тухăçлăрах ĕçленĕ К. Дмитриев, Г. Рыбаков тата эпĕ виçĕ çулхи ĕç нормине иртерсе тултартăмăр. П. Волчков, М. Карпов, Н. Заикин коммунистсем, М. Курочкин, Н. Ялаков комсомолецсем те паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Е. Гунин, Е. Александров, В. Шафранов, А. Тюрин, А. Михайлычев, Н Антонов юлташсем — цехри паллă рационализаторсем. Вĕсем çулталăк хушшинче вунна яхăн рационализаторла сĕнӳ панă, вăл сĕнӳсене ĕçе кĕртсе çулталăк хушшинче 600 пин тенке яхăн перекетленĕ.

Эпĕ çĕнĕ çулта çĕнĕ вăй-халпа, иртнĕ çулхинчен тухăçлăрах ĕçлеме, çулталăк хушшинче 3,5 çулталăк нормине тултарма сăмах паратăп.

В. МЫТИКОВ,
Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбинатĕнчи 3-мĕш цехри столяр.

Механизаторсен ĕмĕчĕ

1952 çула хĕрӳ ĕçпе вĕçлесе, çĕнĕ çула кĕтсе илтĕмĕр. Ленин—Сталин партийĕ тавра таччăн пĕтĕçнĕ аслă совет халăхĕ коммунизм патне çитмелли çул çинче тата тепĕр пысăк утăм турĕ.

Аслă çулпуç Сталин юлташ колхозниксемпе механизаторсене государство панă тракторсемпе тата ытти машинăсемпе тĕрĕс усă курма, вĕсене кирек хăçан та лайăх упрама, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеме вĕрентет. Эпĕ ертсе пыракан бригадăри механизаторсем трактор ĕçĕсен пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе 1952 çулта паллă ӳсĕм турĕç. Çулталăкри производство планне бригада Сталинла Конституци кунĕ тĕлне 124 процент тултарчĕ. «Сталинцы» тата «Красный Октябрь» колхозсен уй-хирĕсенче ĕçлесе, эпир МТС-па колхозсем хушшинче тунă договорсене пур енĕпе те тата иртерсе пурнăçларăмăр.

Çулталăк пуçламăшĕнче трактор бригадисем хушшинчи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, эпир трактор ĕçĕсен хăйне ларакан хакне йӳнетме, машинăсене юсама каякан расходсене чакарма, сĕрмелли хатĕрсемпе горючие перекетлеме çирĕп тĕллев лартрăмăр. Эпир хамăр обязательствăсене мĕнле пурнăçланине çак тĕслĕх те лайăх çирĕплетсе парать.

ДТ-54 маркăллă дизеллĕ тракторпа 1.500 гектар, КД-35 тракторпа 1.000 гектар, урапаллă СХТЗ тракторпа 500 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă. Апла пулин те, çак тракторсенчен пĕрне те юсама мастерской ăсатма кирлĕ пулмарĕ, эпир вĕсене техника тĕлĕшĕнчен тĕрĕслесе, тасатса çеç лартрăмăр. Çавăн пекех бригадăри виçĕ плуга, виçĕ сеялкăпа культиватора тата дисклă лущильнике юсама пĕр пус та расходламан. Тракторсемпе ытти машинăсене тăрăшса упрани пĕр бригадăра кăна государство укçа-тенкине пиншер тенкĕ перекетлеме май пачĕ.

МТС-ра пысăк резервсем пуррине кăтартакан тепĕр тĕслĕхе илетĕп. Пирĕн паркра 1934 çулта кӳрсе килнĕ кивĕ молотилка ларатчĕ. Ăна, çĕмĕрĕлсе пĕтнĕскере, нихăш бригада та йышăнман. Эпир çав молотилкăна хамăр бригадăна илтĕмĕр те мĕнпур вăя хурса юсарăмăр, унтан ĕçлеме тытăнтăмăр. Договор тăрăх колхозсене 300 тонна вырăнне 400 тонна авăн çапса патăмăр, ун хыççăн та пирĕн молотилка çаплипех юсавлă тăрать.

Эпир, ялхуçалăхĕнчи механизаторсем, пирĕншĕн партипе правительство тăрăшнине, пирĕн ĕçе пысăк хисепе хунине куллен туйса тăратпăр. Пуян та культурăллă пурнăç кĕчĕ пирĕн кулленхи пурнăçа.

Çавăн пек ĕнтĕ пирĕн 1952 çулхи ĕçсен кĕске итогĕсем. Анчах коммунистсен партийĕ пире халиччен ĕçсен результачĕсем çине яланах тишкерсе пăхма вĕрентет. Партин XIX-мĕш съезчĕ хальхи пилĕкçуллăхра машинăпа трактор паркĕн ĕç тухăçлăхне 50 процент ӳстерме, кунпа пĕрлех ĕç пахалăхне лайăхлатса пыма кăтарту пачĕ. Çакă вăл пире ĕç резервисене тупса палăртасси, вĕсемпе туллинрех усă курасси çине тата тимлĕрех пăхма хушать.

Çĕнĕ çул—çĕнĕ ĕмĕтсем. Хамăр ĕçлекен колхозсен уй-хирĕсенче акса хăварнă ыраш калчисем çав тери лайăх шăтса юлчĕç. Çуртри акмалли участоксене çĕр процентчĕпех кĕрхи сĕртме туса хăвартăмăр, хура сĕртме тунă çĕр лаптăкĕ те нумай хутшăнчĕ. Çуртрисене кĕске срокра тата лайăх пахалăхпа акса хăварма пирĕн вăйсем çителĕклĕ, çуракине эпир пĕтĕмпех хатĕр темелле.

Партин XIX-мĕш съезчĕ çапла кăтарту пачĕ: пирĕн çĕршывра çĕрĕçне лайăхлатас енĕпе паллă ӳсĕмсем тунă май вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç партипе государствăн ялхуçалăхне аталантарас ĕçри тĕп задачи пулса тăрать. Обществăллă вылăх-чĕрлĕх шутне, унпа пĕрлех тухăçлăхне ӳстерес задачăна пурнăçламалли чи кирлĕ услови вăл—вылăх апачĕн çирĕп никĕсне тăвасси пулать.

Тĕштырăсен тухăçлăхне ӳстерсе пынинче трактор бригадин ĕçĕн результачĕсене куратпăр, анчах обществăллă вылăх-чĕрлĕх валли апат акса тăвас ĕçре колхозсене пулăшнипе мухтанма çук-ха. Çак çитменлĕхе 1953 çулта татăклăнах пĕтересчĕ. Çĕрулмипе тымарçимĕçсене, пĕр çулхи курăксене, силослăх культурăсене лайăх участоксем çине вăхăтра тата май килнĕ таран пысăк пахалăхпа акса хăвармалла. Çĕрулмипе тымарçимĕçсен йăран хушшисене кăпкалатас, удобрени шĕвекĕсемпе апат парас, кĕркунне пухса кĕртес, акнă курăксене, халиччехи пек пĕрре мар, икĕ хутчен çулса пухас ĕçе механизацилеме халĕ пирĕн машинăсемпе тĕрлĕ инвентарь пур, вĕсемпе тĕрĕс усă курни çеç кирлĕ. Çавăн пекех эпир колхозсене техникăллă культурăсен тухăçне ӳстерме, çăмăл промышленность валли чĕртавар нумайрах туса пама, çав никĕс çинче колхозсен укçа-тенкĕ тупăшне ӳстерме ытларах пулăшмалла.

Социализмлă çĕрĕç культурине лайăхлатса пырас задачăсем механизаторсен пĕлĕвне тата ĕçри квалификацине тăтăшах ӳстерме хушаççĕ. Анчах пирĕн механизаторсен паянхи пĕлӳпе лăпланса тăрас шухăш çук. Эпир хĕллехи вăхăтра кашни эрнере пĕр кун вĕренӳ валли уйăрма йышăнтăмăр. Вăл занятисенче эпир хамăрăн пĕлĕве çирĕплететпĕр тата социализмлă промышленность ялхуçалăхĕ валли туса кăларакан çĕнĕ техникăпа паллашатпăр. Совет агробиологи науки çинчен вĕреннĕ чухне хамăр пата агрономсене чĕнсе илетпĕр.

Пĕтĕм совет халăхĕ пекех, пĕр иккĕленӳсĕр тулли шанăçпа пăхатпăр эпир хамăрăн ыранхи çутă пуласлăх çине. Бригада коллективĕ 1952 çулти пекех социализмлă ăмăртура малти ретре пырас, партин XIX-мĕш съезчĕ социализмлă ялхуçалăх ĕçченĕсем умне лартнă задачăсене чыслăн пурнăçлас туйăмпа хавасланса ĕçлет. Аслă Сталин кăтартнă çулпа пырса, 1953 çулта коммунизм строительствинче çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвăпăр. Пирĕн пĕртен-пĕр тĕллев—совет халăхĕн ырлăхĕшĕн чуна парса ĕçлесси.

Т. СТЕПАНОВ,
Çĕрпӳ МТС-ĕнчи трактор бригадин бригадирĕ.

Тата лайăхрах ĕçлер

Савăнăçлă та телейлĕ вăхăтра пурăнатпăр эпир. Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем тата Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕ совет халăхне коммунизмшăн кĕрешмелли программа пачĕç. Сталинла çĕнĕ пилĕкçуллăхра мĕнпур халăх хуçалăхĕпе пĕрле социализмлă ялхуçалăхĕ те хăватлăн аталанмалла.

Колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла тĕреклетсе пырас ĕçре МТС-сем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Государство вĕсене чи çĕнĕ йышши машинăсем нумай парать. Акă, пирĕн Элĕк МТС-ĕ пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхăн иккĕмĕш çулĕнче кăна ДТ-54 маркăллă хăватлă тракторсем 18, самоходнăй комбайнсем 4 илчĕ. Культиваторсем, плугсем, сеялкăсем, молотилкăсем те чылай илсе килнĕ.

Машина-трактор паркне юсама кирлĕ оборудовани пуянланса пырать. 1951 çулта виçĕ электромотор кăна пулнă пулсан, халĕ 17 электромотор ĕçлет.

Пирĕн МТС декабрĕн 10-мĕшĕ тĕлне производство планне 105 процент, комбайнпа тырпул пухса кĕртме панă плана 114 процент ытла тултарнă.

Хастарлă ĕçĕн тĕслĕхне Марков, Васильев, Макаров юлташсем ертсе пыракан трактор бригадисем кăтартрĕç. Вĕсем хăйсене панă производство заданийĕсене 114 процентран пуçласа 130 процента çити пурнăçларĕç, горючи чылай перекетлесе хăварчĕç. Н. Максимовпа М. Андреев трактористсем ДТ-54 тракторпа 800 гектара яхăн сухаланă чухлĕ планпа пăхнинчен ытларах ĕç турĕç. М. Михайлова, И. Павлов, А. Александров, Н. Соснин тата ытти комбайнерсем тырпул пухса кĕртмелли задание чылай иртерсе тултарчĕç. Молотилка машинисчĕсенчен нумайăшĕ паха тĕслĕхсем кăтартрĕç.

МТС ĕçлекен чылай колхозсем тухăçлă тырпул çитĕнтереççĕ. Акă, «Динамо» колхозри Николаев юлташ ертсе пыракан уй-хир бригади кăçал кашни гектартан 20 центнер тулă, 18 центнер урпа пухса кĕртрĕ. «Правда» колхозри Кузнецов юлташ ертсе пыракан бригада гектар пуçне 21 центнер тулă, 22 центнер сĕлĕ çитĕнтернĕ. Кун пек лайăх тĕслĕхсем ытти колхозсенче те пур.

Халĕ МТС мастерскойĕсенче хĕрӳллĕ ĕç пырать. Механизаторсем тракторсемпе ытти машинăсене çураки валли тĕплĕн юсаса хатĕрлессишĕн кĕрешеççĕ. Тракторсем юсамалли 1952 çулхи тăваттăмĕш кварталти плана декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлнех тултарнă.

Эпир тракторсене иккĕмĕш çул ĕнтĕ узловой меслетпе юсатпăр. Çакă вăл юсав ĕçĕн хакне чакарма, машинăсене хăвăртрах та лайăхрах юсама май парать. Пирĕн коллектив механизаторсен республикăри канашлăвĕ чĕнсе каланине пысăк кăмăлпа кĕтсе илчĕ. Эпир тракторсене мартăн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр юсаса пĕтерме, 1953 çулта тракторсемпе, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 50 процент ытларах ĕç тума, колхозсенче агротехникăна çирĕп пурнăçласа мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерме пулатпăр.

Механизаторсем çак ĕмĕтпе пурăнаççĕ: çĕнĕ çулта халиччехинчен тата лайăхрах ĕçлемелле, колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла тĕреклетсе пымалла.

А. БЫКОВ,
Элĕк МТС директорĕ.

Шалти резервсемпе туллин усă курăпăр

1952 çулта Улатăрти пăравуссем юсакан завод коллективĕ пысăк хастарлăхпа ĕçлерĕ. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историллĕ решенисем, съездра И. В. Сталин юлташ тухса каланă сăмах çине рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем стахановла ĕçпе ответлеççĕ. Слесльщиксенчен 69 процентчĕ çулталăкри ĕç нормине 11 уйăхра иртерсе тултарчĕ, çĕршер рабочи çулталăк çурри ĕç нормине е ытларах тултарчĕç. Гущарин, Федоров, Матвеев, Андрианов слесарьсем çĕнĕ çула икĕ çулхи нормăна иртерсе тултарнипе кĕтсе илчĕç.

Завод коллективĕ пăравуссене хăвăртрах юсассишĕн, материалсене перекетлессишĕн тимлĕ кĕрешет. Кивĕ детальсемпе анлă усă курса, рационализаторла сĕнӳсене пурнăçа кĕртсе, слесарь-стахановец Верещагин юлташ 4.500 тенкĕлĕх материал перекетлерĕ.

Заводра производствăна механизацилес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртернĕ. Пăравус кустăрмисене юсакан цехра кустăрмасене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна йăтса куçаракан хăватлă крансем лартнă. Çĕнĕрен бандаж уйрăмĕ туса пĕтеретпĕр. Шăратнă чугун детальсене тасатассине механизацилени ĕç тухăçлăхне чылай ӳстерчĕ, детальсен хăйне ларакан хакне йӳнетрĕ.

1953 çулта завод коллективĕ умĕнче технологи процесне çĕнетсе лайăхлатас, кивелнĕ станоксемпе моторсем вырăнне çĕнĕ оборудовани вырнаçтарса лартас, йывăр ĕçсене механизацилес, тĕп цехсенче пысăк крансем лартас задача тăрать. Асăннă мероприятисене пурнăçланă хыççăн заводăн сăн-сăпачĕ çĕнелсе улшăнать. Кăçал рабочисем валли пурăнмалли çуртсем нумай лартма палăртнă.

Заводра усă курман резервсем сахал мар. Уйрăм цехсем пĕр тикĕс ĕçлемеççĕ.

Пирĕн коллектив, парторганизаци ертсе пынипе, умра тăракан задачăсене чыслă пурнăçласа пырĕ, коммунизм строительствине тата хастарлăрах хутшăнĕ.

Е. СОКОЛОВ,
Улатăрти пăравуссем юсакан завод начальникĕ.

Ăслăлăхпа тĕпчев институчĕн ученăй Совечĕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ чĕлхе, литература тата истори енĕпе ĕçлекен ăслăлăхпа тĕпчев институчĕн ученăй Советне çирĕплетнĕ.

Ученăй Совета çак юлташсем кĕреççĕ: Гусев (председатель) — институт директорĕ, Шалфеева — КПСС обкомĕн шкулсемпе аслă шкулсен пайĕн заведующийĕ, Андреев — Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ, Кузьмин — институтăн ученăй секретарĕ, Горский — филологи наукисен докторĕ, Егоров—филологи наукисен докторĕ, Григорьев — истори наукисен кандидачĕ, институтăн истори секторĕн заведующийĕ, Евлампьев — Пединститут директорĕ, Каховский — Пединститут директорĕн заместителĕ, Лукин — композиторсен союзĕн правленийĕн председателĕ, Токарев—Сутĕç министрĕ, Музыкантов — Чăваш АССР Шалти ĕçсен министерствин архив пайĕн начальникĕ, Шумилов — писательсен союзĕн правленийĕн председателĕ, Денисов — институтăн научнăй сотрудникĕ, Сироткин — СССР Наука академийĕн тĕнче литератури институчĕн докторанчĕ, Канюкова — филологи наукисен кандидачĕ тата ыттисем те.

Мирлĕ ĕç çулĕ

1952 çул иртрĕ. Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхăн иккĕмĕш çулĕ пирĕн коллективăн çĕнĕ çĕнтерӳсен çулĕ пулчĕ. Завод иртнĕ çулхи плана Сталинла Конституци кунĕ тĕлне тултарчĕ, 1947 çулхинчен 20 хут нумайрах çурт туса кăларчĕ. Икĕ тĕрлĕ çурт тăвать пирĕн завод: 56 çын пурăнмалли общежити тата сакăр хваттерлĕ, икĕ хутлă çурт. Кашни кун завод территорийĕнчен вуншар çын пурăнмалли икшер çурт тухса каять. Завод çулталăкра ăсатнă çуртсене курас пулсан, куç умне поселок тухса тăрать.

Эпир тунă çуртсем Донбаса, Мускав çывăхĕнчи çĕр кăмрăк бассейне, Тутар тата Пушкăрт республикисене каяççĕ. Вĕсенче çĕр айĕнчен «хура ылтăн» кăларакансем — шахтерсемпе нефтяниксем пурăнаççĕ. Вĕсем пирĕн завод продукцине ырлаççĕ. «Сирĕн çуртсем, — тесе çырать Донбасс шахтерĕсен пĕр ушкăнĕ, — çирĕп, çутă тата пурăнма меллĕ. Ытти предприятисем тунă çуртсемпе танлаштарсан, вĕсем лайăхрах та илемлĕрех. Тата ытларах туса кăларма ыйтатпăр кун пек çуртсем».

Ĕççыннисем тав туса çырнă çырусем завод управленине ытти çĕртен те килсе тăраççĕ.

1952 çул завод çĕнĕ техникăпа пуянланнă çул пулчĕ. Пирĕн предприятире паркет тумалли автоматсем, хăватлă лебедкăсемпе автопогрузчиксем тата ытти çĕнĕ машинăсемпе механизмсем ĕçлеççĕ.

Çĕнĕ техника рабочисен ĕç тухăçлăхне ӳстерме, пурнăçне лайăхлатма пулăшать. 1952 çулта рабочисемпе работницăсенчен 77 процентчĕ стахановецсемпе ударниксен ретне тăчĕç. 734 рабочи çулталăкри ĕç нормине 11 уйăх хушшинче тултарчĕ. Чылайăшĕ 1953—1954 çулсем шучĕпе ĕçлеççĕ. Акă, манăн ĕçри юлташсем А. Манюковпа Н. Моисеев столярсем пиллĕкмĕш пилĕкçуллăх нормине икĕ çул хушшинче тултарчĕç. Çуртсем тăвакан цехри Г. Сергеевпа М. Бычков грузчиксем, механически цехри Н. Багановпа И. Максимов рабочисем, экспедиципе транспорт цехĕнчи А. Галгинпа А. Курганов юлташсем çулталăкри нормăна 11 уйăх хушшинчех икĕ хут иртерсе тултарнă. Пирĕн цехри А. Алексанина, Е. Албутова тата Н. Куликова работницăсем те 1952 çула 1,5-шер норма тултарнипе паллă турĕç.

Эпĕ çуртсем тăвакан заводра ĕçлеме пуçланăранпа кăçал 17 çул тултарать. Завод мана, хресчен ачине, совет çыннисен малти ретне кăларчĕ. Эпĕ, сухапуçĕ кăна тыткалама пĕлнĕ çын, ăста столяр, паллă стахановец пулса тăтăм. Пилĕк çул хушши ĕнтĕ манăн ят заводри хисеп кĕнеки çинче тăрать. Виçĕ çул нормине тултарнипе кĕтсе илтĕм эпĕ çĕнĕ 1953 çула. Çĕнĕ çул, паллах, коммунизм строительствинчи çĕнĕ çĕнтерӳсен çулĕ пулĕ.

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе пирĕн çĕршывра пурăнма та, ĕçлеме те хаваслă пулса тăчĕ. Халăх телейне туса паракана, аслă Сталина çĕнĕ çул ячĕпе сывлăх сунса тав тăватпăр.

А. ПАВЛОВ,
Куславккари çуртсем тăвакан заводри стахановец.

Шупашкарти пир-авăр комбиначĕ çуллен-çул сарăлса пырать. Виçĕ çул каялла тума тытăннă çип арлакан фабрика çулталăк хушши ĕнтĕ Тăван çĕршыв валли продукци туса кăларать. Фабрикăри çип арлакан цех чи лайăх ĕçлекен цехсенчен пĕри шутланать. Вăл виçĕ уйăх хушши фабрикăри куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава тытса тăрать. Цехри З. А. Малахова мастер смени уйрăмах пысăк пахалăхлă продукци туса кăларать. Сменăри нумай стахановкăсем октябрь уйăхĕнче 1952 çулхи плана тултарнă, 1953 çулшăн ĕçленĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): З. А. Малахова мастер, çип арлакансем К. С. Мефодьева, А. А. Якимова, Т. А. Шаронова тата А. Г. Синева юлташсем.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Производство культури ӳсет

Шупашкарти макарон фабрики пĕлтĕрхи планран иртерсе икĕ миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ, 2.000 килограмм ытла çăнăх перекетлерĕ, чылай тупăш турĕ. Апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларакан предприятисем хушшинчи ăмăртура пирĕн фабрика темиçе хутчен малти вырăна тухрĕ, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Иртнĕ çул производствăна механизацилес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса иртертĕмĕр: çурма автомат туянса ĕçе ятăмăр, сушилкăна çĕнетсе пысăклатрăмăр. Рационализаторсем панă сĕнӳсем тăрăх продукцие хумалли ещĕксене цеха ямалли тоннель тунă, хатĕр продукцие цехран склада турттарма транспортер лартма пуçланă.

1953 çулта фабрикăна пысăк задани çирĕплетсе панă. Çĕнĕ çула хатĕрленнĕ май виçĕ сушильнăй шкаф туса лартнă, продукцие типĕтмелли рамкăсем тума тытăннă. Кăçал тепĕр шнеклă пресс лартма палăртнă. Фабрика çĕнĕ йышши изделисем туса кăларма тытăнать. Производство культурине ӳстерес, рабочисем валли паха майсем туса парас тесе, матрицăсене шыв вăйĕпе тасатмалла тăватпăр, душ, тасалăх пӳлĕмĕ уса[illegible]

Фабрикăри рабочисем çĕнĕ çулăн [illegible] танхи кунĕсенчех тухăçлă ĕçлеме[illegible] производство планне куллен тултар[illegible]ма, продукци пахалăхне лайăхла[illegible]мах параççĕ.

В. Т[illegible]
макарон фабрикин г[illegible] ин[illegible]

Пирĕн тĕллев — коммунизм

Пирĕн земляксен саламĕсем

★

Çитĕнӳсем тума ырă сунатпăр

Хаклă земляксем, Çĕнĕ çул ячĕпе сире пĕтĕм чĕререн саламлатăп!

Тăван республикăна, хамăн юратнă Улатăр хулине эпĕ яланах ăшă кăмăлпа асăнатăп. Унта манăн ача чухнехи çулсем иртнĕ, унта эпĕ пурнăç çулне тухма путевка туяннă. Ачаранах паровозник пулма ĕмĕтленнĕ ĕмĕте эпĕ тăван республикăра пурнăçланă.

Миллионшар совет çыннисем пекех, мана та комсомол, коммунистсен партийĕ хамăрăн чечекленекен Тăван çĕршыва хĕрӳ юратма, тунă ĕçе тишкерсе хаклама, пĕр вырăнта лăпланса тăмасăр, яланах малалла — коммунизм çулĕпе кайма вĕрентрĕç.

Елчĕк районĕнчи Шмалак ялĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ манпа пĕрле ĕçлекен Иван Алексеевич Ермаков, çавăн пекех пирĕн депора ĕçлекен машинистсем Канаш районĕнчи çĕнĕ Ахпӳрт ял çыннисем С. Никитин, Г. Цаплин тата Е. Хрисанов хăйсен землякĕсене Çĕнĕ çул ячĕпе хĕрӳллĕ салам яраççĕ. Пурте эпир Тăван республика столицинчен — Мускавран поездсем илсе çӳретпĕр.

Иртнĕ 1952 çул совет халăхĕн историне пĕтĕм тĕнчипе паллă историллĕ çĕнтерӳсем тунипе çырăнса юлчĕ. Ленин — Сталин партийĕн XIX-мĕш съезчĕ коммунизм туса çитермелли гигантла строительствăсен программине палăртрĕ. Пирĕн пурнăçри кашни Çĕнĕ çул коммунизм патне çывхармалли пысăк утăм пулса тăрать. Сталин юлташ ăслăн ертсе пынипе совет халăхĕ коммунизмăн çутă та телейлĕ кунĕсем патне утать.

Иртнĕ çул маншăн асран тухми событисемпе пуян çул пулчĕ. Май уйăхĕнче эпĕ Совет делегацийĕн составĕпе туслă Польшăра пултăм. Халăх демократи строй çĕршыва çĕнетсе урăхлатмалли хăватлă вăй пулса тăнине хам куçпа куртăм. Столицăри тата Мускав облаçĕнчи коммунистсем мана Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн делегатне суйласа пысăк чыс турĕç. Съездра пулни, съезд ĕçĕнĕ кунсем манăн пурнăçри ĕмĕр асран тухми кунсем пулчĕç Эпĕ юратнă çулпуçа Сталин юлташа куртăм, унăн историллĕ сăмахне илтрĕм.

Ноябрь уйăхĕнче миршĕн тăракансен Пĕтĕм Союзри тăваттăмĕш конференцийĕнче пултăм. Унта мана мире хӳтĕлекенсен Совет комитечĕн членне суйларĕç.

Иртнĕ 1952 çул маншăн ĕç тухăçлăхне ӳстерес, производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тăвас тĕлĕшпе те асран тухми çул пулчĕ. Эпир пĕр машинăпа ĕçлекен И. Ермаков тата Б. Строчка машинистсемпе пĕрле локомотива уйăхра 23.400 пин тонна-километр таран ĕçлеттеретпĕр, пăравуса бандажсене хăйрамасăр 100 пин километр ытларах чуптаратпăр.

Эпир коммунизмăн сталинла аслă стройкисем валли груз турттаратпăр. Çакă пире тата лайăхрах ĕçлеме, çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарать. Сталинла çĕнĕ пилĕкçуллăх заданийĕсене срокчен тултарас тесе эпир Александр Жаринов машинистпа иксĕмĕр техникăпа экономикăллă нормăсене комплекслă майпа ирттерсе тултарассишĕн социализмлă ăмăрту пуçарма сĕнӳ патăмăр.

Хаклă тусăмăрсем! Пире чăваш халăхĕ хăйĕн экономикине тата формипе нацилле, содержанийĕпе социализмлă культурăна хăвăрт аталантарса пыни чĕререн савăнтарать. Эпир республикăри ĕççыннисем тунă кашни ӳсĕме хавасланса кĕтсе илетпĕр, вĕсемшĕн савăнатпăр. Пире партин XIX-мĕш съезчĕ панă директивăсем тăрăх сталинла çĕнĕ пилĕкçуллăхра Шупашкар тĕлĕнче коммунизмăн тата тепĕр пысăк стройкине тума палăртни те чĕререн савăнтарать.

Тăван çĕршыва чечеклентерес тĕлĕшпе Çĕнĕ 1953 çулта сире тата пысăкрах çитĕнӳсем тума ырă сунатпăр.

В. Г. БЛАЖЕНОВ,

Мускав—Рязань чугун çулĕн Москва—Сортировочная депори аслă машинист, СССР Верховнăй Совет депутачĕ, Сталинла премии лауреачĕ.

Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн

Çĕнĕ çулта эпĕ Чăваш республикинчи ĕççыннисене хуçалăхпа культура строительствин пур участокĕсенче те хаваслăн та ăнăçлăн ĕçлеме сывлăх сунатăп.

Çĕнĕ çулти кашни çĕнĕ кун телейле те савăнăçлă пурнăç строительствинче пысăкрах та пысăкрах ăнăçлăх тума май патăр.

Çĕнĕ çулти кашни çĕнĕ кун пире пĕтĕм тĕнчипе мир пулас кун патне илсе пытăр.

Çĕнĕ çулти кашни çĕнĕ кун пирĕн коммунизм патне çитмелли çула кĕскеттĕр.

Н. Д. МОРДВИНОВ,

СССР халăх артисчĕ, Сталинла премисен лауреачĕ.

Çĕрĕç культурине ӳстерер

Хаклă юлташсем, земляксем! Коммунизм туса çитерес задача пире — ученăйсене, агрономсене, колхозниксене — пирĕн республикăн тăприне çĕнетсе лайăхлатма тĕрĕс майсем пуррине кăтартса пачĕç. Тарăн сухаласа акас ĕç республикăри чылай колхозсенче (Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан, Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» тата ытти колхозсенче те) ăнăçлăн пулса пырать.

Сире çĕнĕ çул ячĕпе саламласа, Тăван çĕршывăн сутçанталăкне çĕнетсе лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене тата анлăрах, тата тарăнрах, тата лайăхрах тума ырлăх сунатăп.

пурне те ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата ытларах ӳстерме хушать. Çĕнĕ пилĕкçуллăх хушшинче тĕштырăн пĕтĕм тухăçлăхĕ 40—50 процент ӳсмелле. Çавăн пекех техникăллă культурăсен тухăçлăхне те чылай ӳстермелле. Çакна тăвас пулсан чи малтан техникăна тата агрономи культурине лайăх пĕлни кирлĕ. Тырпул тухăçлă пултăр тесен, тăпрана тарăн сукаласа (30 сантиметр е ытларах) акмалла, курăк акса тĕрĕс пуçă çаврăнăшĕ тумалла, минераллă удобренисемпе ытларах усă курмалла.

Çĕрпӳри селекци станцийĕн, Чăваш Ялхуçалăх институчĕн тата МТС-сем сумĕнчи хăшпĕр агрохимлабораторисен (Вăрнарти, Комсомольскинчи) ĕç опычĕ

Сирĕн земляк И. Н. АНТИПОВ-КАРАТАЕВ,

Таджик ССР-н Наукăсен академийĕн действительнăй членĕ, СССР Наукăсен академийĕн профессорĕ.

Мускав хули.

Петĕр ХУСАНКАЙ,

Чăваш халăх поэчĕ

Тав курки

Пăр-юрлă инçе çурçĕрте те,
[illegible]ми кăнтăрта та паян
[illegible]ав сассипе хĕпĕртетĕн,
[illegible]ыв пĕрлĕхне эс туян!

[illegible]ĕ çул, çĕнĕ телей! —
[illegible]мльти сехет
[illegible]ик хут тĕнчипеле
[illegible]аса илет.

[illegible]ă çĕршывăмăр аслă,
[illegible]чунĕ пек сарлака.
[illegible] тултарар та—хаваслăн
[illegible] перекетлĕ курка.

Тав курки сĕтел тавра
Çаврăнмассерен
Юррине юрлах тăрар
Пĕтĕм чĕререн.

Пĕрремĕш куркамăр—Çулпуçăн,
Ана ырлăх-сывлăх сунар.
Тепри—пĕртăванлă Союзшăн,
Унтан Мир курки тултарар.

Çĕр чĕлхен пĕр аслă тав
Мир çыннисене.
Ырă кăмăллă йыхрав
Кайтăр тĕнчене!

Тата хастарлăрах ĕçлер!

Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе коммунизм патне хăюллăн утакан паттăр совет халăхĕ иртнĕ çулталăк хушшинче Тăван çĕршывăн экономикипе культурине малалла ӳстерес тĕлĕшпе çĕнĕ, чаплă çитĕнӳсем турĕ.

1952 çулхи чи паллă событисенчен паллăраххи вăл—Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ пулса тăрать.

Партин XIX-мĕш съезчĕ умĕн халăхсен аслăран та аслă çулпуçĕ Иосиф Виссарионович Сталин юлташ «СССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ произведенипе çырса кăларчĕ. Çак чаплăран та чаплă кĕнеке тата партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историллĕ решенисем совет халăхне коммунизм тăвас ĕçре калама çук пысăк та мухтавлă малашлăх уçса пачĕç.

Иртнĕ çул пирĕн Чăваш республикинте, Совет Союзĕнчи ытти тăванла республикăсем пекех, коммунизм çулĕпе малалла утса, пысăк, çĕнĕ çитĕнӳсем турĕ. Чăваш çĕршывĕн экономики, ĕççыннисен материальнăй тата культурăллă шайĕ татах та ӳлĕрех пусăма çĕкленчĕ.

Пирĕн колхозлă анлă уй-хирсенче пиншер тракторсемпе комбайнсем ĕçлеççĕ, хуласемпе рабочи поселоксенче вуншар заводсемпе фабрикăсем кĕрлеççĕ, çĕнĕрен çĕнĕ пысăк предприятисем ӳссе лараççĕ. Республика столици—Шупашкар—сталинла пилĕкçуллăхсем хушшинче палламалла мар улшăнчĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă çĕнĕ пилĕк çуллăх план тăрăх Атăл çинче, ытти аслă стройкăсемпе пĕрлех, Шупашкар ГЭС-не тума палăртни республикăри ĕççыннисене коммунизм тăвас ĕçре калама çук хытă хавхалантарать. Çак аслă стройка ĕçе кĕрсен, мĕн тери улăштарĕ вăл пирĕн республикăн сăн-сăпатне!

Чăваш халăхĕн культури, литературипе искусстви çултан-çул ӳссе, чечекленсе пырать. Чăваш совет писателĕсемпе композиторĕсем, художникĕсем юлашки çулсенче чылай паха произведенисем çырчĕç. Иртнĕ çулта Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Ф. М. Лукин Сталинла преми лауреачĕн чаплă ятне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Чăваш халăх поэчĕ Я. Ухсайăн «Çул» ятлă сăвăллă романĕ Мускавра вырăсла пичетленсе тухрĕ. Çитес çулсенчех чăваш совет писателĕсем хушшинче те Сталинла преми лауреачĕсем пуласса эпир çирĕп шанса тăратпăр. Хамăрăн çитĕнӳсем çине пăхса савăннă вăхăтра эпир, яланхи пекех, чи малтан аслă Ленин—Сталин партине, хамăрăн юратнă çулпуçăмăра—Сталин аттене тата чăваш халăхне пур чухне те тăванла пулăшса тăракан аслă вырăс халăхне асăнса пĕтĕм чĕререн тав тăватпăр.

Пирĕн ĕçре, уйрăмах чăваш совет писателĕсен ĕçĕнче, çитĕнӳсемпе пĕрлех, пысăк çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Чăваш совет литератури çаплах-ха пурнăçран юлса пырать. Пирĕн нумай произведенисем идейăпа художество тĕлĕшĕнчен çителĕклĕ таран çӳлĕ пусăмра тăмаççĕ, хушăран халтурăллă е сиенлĕ произведенисем те пичетленсе тухкалаççĕ. Уйрăмах чăваш драматургийĕ юлса пырать. Ку вăл пуринчен малтан чăваш писателĕсем хушшинче критикăпа самокритика тивĕçлĕ вырăнта тăманнинчен, пирĕн литература критики çав тери вăйсăр пулнинчен килет.

Аслă Сталин панă кăтартусене, партин Центральнăй Комитечĕ идеологи ыйтăвĕсем тĕлĕшпе йышăннă решенисене тата Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче тунă докладра литературăпа искусство тĕлĕшпе каланă паха сăмахсене яланах асра тытса тата вĕсене куллен-кун пурнăçласа, 1953 çулта чăваш совет литературипе искусствинчи çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшмалла. Сталин саманине тивĕçлĕ çĕнĕ, лайăх произведенисем çырассишĕн хамăрăн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

А. КĂЛКАН,

Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ.

Пирĕн пысăк тивĕç

Партипе правительство, аслă Сталин юлташ куллен тăрăшнипе пирĕн çĕршывра художниксене тухăçлăн ĕçлеме пур майсем те туса панă.

Совет искусстви тĕнчери чи малта пыракан, реализмлă, идейăллă искусство пулса тăрать.

Совет художникĕсем халăхсен ирĕклĕхĕне телейĕшĕн, миршĕн, коммунизм обществи туса çитерессишĕн кĕрешмелине аван пĕлсе тăраççĕ.

Пирĕн çĕршывра искусствăна пĕтĕм халăх юратать. Çавăнпа халăх художниксенчен ыйтасси те ӳссех пырать. Пирĕн, художниксен, пурнăçа куллен пĕлсе, сăнаса тăмалла, тĕпчесе вĕренмелле, социализмлă обществăра куллен çĕннисене тупса халăх ыйтнине тивĕçтерме тăрăшмалла.

Художникшăн пулсан юмахри пек чаплă çитĕнӳсем тăвакан совет çыннишĕн ĕçлесси чи пысăк чыс та хисеп пулса тăрать.

Эпĕ Чăваш республикинче çуралса ӳснĕ. Шупашкарти художество училищинчен, унтан И. Е. Репин ячĕпе тăракан живопись, скульптура, архитектура тата искусство теорийĕ институтĕнчен вĕренсе тухрăм. Халĕ темиçе çул каярах хам вĕреннĕ училищăна ĕçлеме килтĕм. Эпĕ пĕтĕм пĕлĕве, пултарулăха ӳссе пыракан талантлă чăваш çамрăкĕсене парăп.

Преподаватель пулса ĕçленĕ вăхăтрах творчествăна аталантарса пырса эпĕ паха произведенисемех çырма пултартăм, РСФСР-ти художниксен Мускавра пулса иртнĕ выставкине хутшăнтăм. Эпĕ тунă «Юннатка» картина пирĕн çĕршыври ачасен телейлĕ пурнăçне кăтартса парать. Куракансем çав картина лайăх хак пачĕç.

Эпĕ республикăри выставкăна хутшăннипе лăпланса лармастăп, творчествăна ӳстерсе пырса, Пĕтĕм Союзри выставкăсене хутшăнма тăрăшатăп.

Çĕнĕ 1953 çулта эпĕ чăваш халăхĕн пурнăçĕ лайăхланса пынине тата çамрăксен туслăхне кăтартакан тĕмăсем тăрăх картинăсем тăватăп.

Юратнă Тăван çĕршыв, тăван халăх ырлăхĕшĕн ĕçлесси кашни çыншăн пысăк тивĕç.

Р. ЕРМОЛАЕВА,

художество училищинче ĕçлекен художник-преподаватель.

Театр искусствине—çӳлĕ пусăма!

Совет халăхĕ çĕнĕ, 1953 çула пысăк çĕнтерӳсемпе кĕтсе илет.

Коммунизм строительствинче совет çыннисен ăнланулăхĕ палăрса тăрать.

Халăха идейăллă воспитани парас енĕпе искусство умĕнче уйрăмах пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Ку задачăсене пурнăçлани ĕççыннисен культурине хăпартса вĕсен социализмлă ăнланулăхне ӳстерме май парать.

Чăваш халăхĕн театр искусствине чечеклентерме партипе правительство çултан-çул пысăк пулăшу параççĕ.

Чăвашсен государство академи театрне организациленĕренпе кăçал январĕн 27-мĕшĕнче вăтăр пилĕк çул тултарать. Çак вăхăт хушшинче театр пысăк çитĕнӳсем турĕ.

Театр коллективĕ 1952 çулта сичĕ çĕнĕ спектакль кăтартса пачĕ. Куракансем спектакльсене юратса йышăнчĕç. Коллектив пĕлтĕр 450 спектакль ытла лартрĕ. Вăл спектакльсенчен çуррине ытла Куйбышев, Чкалов, Ульяновск облаçĕнчи тата Пушкăрт, Тутар Чăваш республикинчи 80 пине яхăн ĕççыннисем курчĕç.

1953 çулта Чăвашсен государство академи театрĕ Чăваш драматургĕсен А. Эсхелĕн «Виçĕ туй», Я. Ухсайăн «Сурхи шывсем», Л. Родионовăн «Юратнă хĕр», вырăссен аслă писателĕн М. Горькин «Варвары» пьесисене тата миршĕн кĕрешнине кăтартакан «Завтра будет нашим» ятлă пьесăна кăтартма хатĕрленет.

Идейăпа художество енчен пысăк пахалăхлă спектакльсем йĕркелес тесе, театр коллективĕ пĕтĕм вăйне, пултарулăхне хурса, халăха килĕшмелле спектакльсем лартса пама тăрăшать.

Театр коллективĕ коммунизм строительствинче ĕççыннисен чун-хавалне çĕклекен, вĕсене мирлĕ ĕçре пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме чĕнекен, шухăш-кăмăлсене хумхантаракан спектакльсем кăтартассишĕн çине тăрса ĕçлет.

И. МОЛОДОВ,

Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ.

Ферма ĕçне лайăхлататпăр

Хаваслă ĕçре иртнĕ çул вĕçленчĕ, çĕнĕ çул пуçланчĕ. Çавăн пек чухне яланах халиччен ӳсĕмсене пăхса тухас, малашнехи задачăсене палăртас килет.

Аслă çулпуçăмăр умĕнче илнĕ обязательство фермăра ĕçлекенсен хастарлăхне вăйлăн çĕклерĕ. Вĕсем хăйсен сăмахне тӳрре кăларас тесе, султалăк тăршшĕпех ырми-канми тата тӳрĕ кăмăлпа ĕçлерĕç. Халĕ ĕнтĕ хамăрăн пархатарлă ĕçе пăхса тухма та кăмăллă.

Сыснасем ĕрчетмелли государство планне чылай иртерсе тултартăмăр. Фермăра пурĕ 405 сысна усратпăр. 1951 çулта кашни амаран 12,8-шер çура илнĕ пулсан, пĕлтĕр вара 17,2-шер çура илтĕмĕр.

Сыснасем ĕрчетес ĕçе ăнăçлăн туса пыни ытти обязательствăсене срокчен пурнăçлама май пачĕ. Государствăна аш-какай памалли плана иртнĕ çулхисенчен чылай малтан тултартăмăр. Çав вăхăтрах çитес çулшăн 800 килограмм сысна ашĕ парса хутăмăр.

1952 çулта сысна ферминчен 260 пин тенкĕ тупăш илтĕмĕр.

1953 çулта эпир кашни сысна аминчен 19-шар çураран кая мар илсе пăхса ӳстерме, сысна ферминчен илекен тупăша 300 пин тенкĕрен иртерме пулатпăр. Ферма валли стандартлă икĕ вите тăватпăр, тепĕр кормозапарник тунатпăр. Сысна фермине водопровод кĕртетпĕр.

И. ОГУРЦОВ,

Сталин ячĕпе тăракан колхозри сысна фермин заведующийĕ.

Мурнаш районĕ.

Пирĕн земляксен саламĕсем

★

Çĕнĕ телейпе!

Çĕнĕ çул кунĕнче манăн хамăн земляксене пирĕн парти çак пилĕкçуллăхра Шупашкар гидроэлектростанцине тума йышăннă чаплă решенипе саламлас килет. Çакă юмахри пек чаплă сооружение, коммунизмăн ытти аслă стройкисем пекех, совет халăхĕн çулпуçĕпе учителĕ И. В. Сталин юлташ пуçарнипе тăваççĕ. Гидроэлектростанци чăваш çĕршывĕн экономикипе культурине калама çук хăвăрт аталантарма май парĕ.

Пысăк пĕве Атăл шывне пӳлсен, Чăваш республикинчи чылай шывсем каялла юхма пуçлĕç, типĕ çырмасем шывпа тулĕç. Вĕсем шăрăх çанталăкра уй-хире шăварма май парĕç. Пулă ĕрчетме пысăк шывсем пулĕç. Çавал тăрăх пăрахутсем çӳреме пуçлĕç. Хăватлă гидроэлектростанцин энергийĕ пралуксем тăрăх кашни колхозлă яла, уй-хирсене кайĕ. Çавăн чухне фабрикăсемпе заводсенчи машинăсем кăна мар, хирти тракторсемпе комбайнсем тата ытти машинăсем те электричество вăйĕпе ĕçлĕç. Электричество чăваш халăхĕн кулленхи пурнăçне çирĕп кĕрĕ. Эпĕ çамрăк чухне пурнăç çавăн пек пуласса нимĕнле юмахра та асăнма пултараймаң.

Пĕр 35—40 çул каярах чăвашсене хăйсен культурине ӳстерме питех те йывăр пулнă. Ун чухне пуçламăш шкултан тухсан малалла вĕренме кирлех те мар, тесе шухăшланă. «Вулама, çырма пĕлсен—çитет», тенĕ ашшĕ-амăшĕсем ачисене шкула яма май пулсан.

Халĕ наука çитĕнĕвĕсене пĕлмесен, вĕренмесен, фабрикăсемпе заводсенче ĕçлеме çеç мар, колхозра та пĕр утăм утма çуккине кашниех пĕлет. Шупашкар гидроэлектростанцине туса пĕтерсе ĕçе ярсан çĕнĕрен пиншер машина, нумай механизмсем хутшăнĕç, колхозсем хăватлăн аталанса пыма тытăнĕç. Республикăна çĕршер, пиншер агрономсем, техниксем, инженерсем, ученăйсем кирлĕ пулĕç. Çавăнпа чăваш çамрăкĕсен аслă Ленин — вĕренмелле, вĕренмелле тата вĕренмелле, тесе кăтартса панине яланах асра тытмалла.

Кашни совет çыннине производствăра ĕçлеме пысăк пĕлӳ кирли пурне те паллă. Унсăр пуçне пирĕн пурин те марксизм-ленинизм теорине, общество аталанăвĕ, коммунизм строительстви çинчен вĕрентекен сталинла наукăна пĕлни кирлĕ. Çав наукăсене Сталин юлташ вĕрентнĕ пек пĕлсен çеç эпир производство ыйтăвĕсене тĕрĕс татса пама, ĕçе мĕнле тумаллине пĕлĕпĕр. Ку тĕлĕшпе И. В. Сталин юлташăн «СССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ произведение тĕплĕн вĕренни пысăк вырăн йышăнать.

Эпир чăннипех те тĕлĕнмелле вăхăтра пурăнатпăр. Пирĕн çĕршыври ĕççыннисене кашни Çĕнĕ çул çĕнĕ ӳсĕмсем патне илсе пырать, çĕнĕ телей кӳрет.

Çĕнĕ çул ячĕпе, çĕнĕ телейпе, хаклă земляксем!

П. В. ВАСИЛЬЕВ,

профессор, экономикăллă наукăсен докторĕ, СССР Наукăсен академийĕн вăрман институчĕн директорĕн заместителĕ.

Тăван çĕршыв тĕрекĕшĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешер

Хаклă земляксене—тăван республикăри рабочисемпе служащисене. колхозлă ялсен ĕçченĕсене Çĕнĕ çул ячĕпе чĕререн саламлатăп, коммунизм строительствинче çĕнĕ хăватпа ĕçлеме ырлăх сунатăп.

Эпĕ тăван республикăра час-часах пулатăп. Унти ĕççыннисем хастарлă ĕçленине, тулăх та культурăллă пурăннине курса савăнатăп. Чăваш çĕршывĕ куллен тĕрекленсе, чечекленсе пынине курсан тата тăрăшарах ĕçлес килет.

Хаклă земляксене Çĕнĕ çул ячĕпе саламласа, кашнине хăйĕн пурнăçĕнче сывлăх, телей, ĕçре ăнăçлăх сунатăп. Кашнин ĕçĕ халăхсене ытларах телей кӳтĕр, коммунизм туса çитерес куна çывхарттăр.

Тăван çĕршыв тĕрекĕшĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешер!

А. МАРКОВ,

генерал-майор.

Манăн сĕнӳсем

Чăваш халăх историне, этнографи материалĕсене, халăх творчествине, чĕлхе ыйтăвĕсене вĕреннĕ май тата çак енĕпе тунă çитĕнӳсене сăнаса пынă май, манăн малашне мĕн тумалли çинчĕн калас килет.



«Чăвашсем» тенĕ сăмах 1524 çулта тĕл пулнине палăртнă. Унчченхи вăхăтра чăваш халăхĕн ячĕ мĕнле пулнă, — ку ыйту пирки никам та татăклăн калаймаң-ха. Марксизм-ленинизм методологийĕпе усă курса, историксем асăннă ыйту çине ответ пама пултараççĕ. Вĕсене, хут çине çырнă документсемсĕр пуçне, çĕр айĕнче тупăнакан япаласем нумай каласа парĕç. Масарсемпе улăп тăприсем, çынсем пурăннă вырăнсем — унта тупăнакан япаласем наукăшăн питĕ хаклă. Ку енĕпе наукăпа тĕпчев ĕçĕсене анлăн туса пырсан, чăвашсен авалхи пурнăçĕ мĕнле пулнине тĕплĕн пĕлме пулĕ.

Халăхăн авалхи пурнăçĕ мĕнле пулнине пĕлсен, вара кашни çын пирĕн халăхăн пурнăç калама çук нумай малалла кайнине, пурнăç лайăхланнине уççăнрах куракан пулать.

Октябрьти Социализмлă Аслă революци пуличченхи вăхăтра чăваш халăхĕ, Российăри ытти халăхсем пекех, пусмăр тӳссе пурăннă, унăн çулĕ çинче малалла кайма чаракан чăрмавсем питĕ нумай пулнă. Октябрьти революци ĕççыннисене пур тĕрлĕ пусмăртан та хăтарчĕ, анлă çул уçса пачĕ В. И. Ленинпа И. В. Сталин чăваш халăхĕн культурине ӳстерме пулăшрĕç. Çавăнпа ĕнтĕ чăваш халăхĕ пурăнакан çĕршыври ялсемпе хуласенче, уй-хирсенче, улăхсенче, вăрмансенче чĕре патĕнчен тухакан юрă илтĕнсе тăрать. «Пире Ленин çул кăтартрĕ, Сталин çак çулпа илсе пырать».

Профессор Н. В. НИКОЛЬСКИЙ.

Хусан хули.

Анатолий ЖИРНОВ.

Çĕнĕ çул сăвви

Шăранать-çке сăвă-юрă чĕрере,
Ырă туйăм, савăк кăмăл çĕкленет.
Çак телейлĕ пурнăçа та ĕмĕре
Чунтанах ырлас-мухтассăм ман килет.

Çĕршыв тăрăх çепĕç юрă вĕстĕр-и,
Мускава вăл çиттĕр—аслă Кремĕле.
Вăл юрра юратнă Сталин илттĕр-и,
Куртăр, пĕлтĕр пирĕн пысăк телее.

Савăнса кĕтсе илетпĕр çĕн çула
Ĕçри пысăк, ĕçри çĕнĕ ӳсĕмпе.
Сурхи сад пек çĕкленессĕ ял-хула,
Ешĕрессĕ аслă Сталин çулĕпе.

Коммунизмăн аслă, чаплă стройкисем
Кăтартассĕ эпир миршĕн тăнине.
Сук, чĕртеймĕç çĕнĕ вăрçă тăшмансем,
Çĕнтереймĕç мирлĕ халăхăн вăйне.

Тултарар, туссем, тулли черкесене,
Аслă Сталиншăн, çĕршывшăн халь йăтар,
Малалла, çулпуç ертсе пынипеле
Харăссăн та çирĕппĕн утар!

Шăранать-çке сăвă-юрă чĕрере,
Ырă туйăм, савăк кăмăл çĕкленет.
Çак телейлĕ пурнăçа та ĕмĕре
Чунтанах ырлас-мухтассăм ман килет.

Халăх демократи çĕршывĕсенчи хаçатсем ССР Союзĕ 30 çул тултарни çинчен мĕн çыраççĕ

„Этемлĕх историйĕнчи пысăк событи"

ВАРШАВА, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăри мĕнпур хаçатсем Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне тунăранпа 30 çул тултарнине анлăн паллă тăваççĕ.

Совет республикисене ирĕклĕ пĕрлештересе Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне туни, тесе çырать «Трибуна люду» хаçат, этемлĕх историйĕнче питĕ пысăк событи пулса тăчĕ. Вăйсăр халăхсене вăйлăрах халăхсем пăхăнтарса тата пусмăрлăха кĕртсе ӳкернипе мар, Союза кĕрекен халăхсене пĕр танлăх никĕсĕ çинче ирĕклĕ пĕрлештересе, историре малтанхи хут нумай нацилĕ государство тунă.

Ку событи, кăтартса парать хаçат, Октябрьти Социализмлă Аслă революци çĕнтернипе, помещиксемпе капиталистсен влаçне сирпĕтсе антарнипе, нацисен самоопределени правине йышăннипе пулма пултарчĕ.

Советлă Социализмлă Республикисен Союзне тунă хыççăн иртнĕ 30 çул хушшинче ленинла-сталинла наци политики, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ пурнăçласа пыракан политика, нумай çĕнтерӳсем турĕ.

Совет Союзĕнчи ирĕке тухнă халăхсен тĕслĕхĕ, тесе çырать малалла хаçат, тĕнчери пусмăрта пурăнакан мĕнпур халăхсене хăйсен вăйĕсене шанса тăма тата ирĕке тухассине ĕненсе тăма пулăшать.

Наци политикин ленинла-сталинла принципĕсем Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсем хушшинчи çыхăнусен тĕп никĕсĕ пулса тăчĕç. Ку çыхăнусем тăрăх халăхсем тăван пек туслă пурăнаççĕ, союзлă пулса пĕрне-пĕри пулăшса пыраççĕ. Вăл çыхăнусенче халăхсем хушшинчи пĕр танлăх тата халăхсем пĕрне-пĕри хисеплени уççăн палăрать.

„Совет Союзĕн государство йĕркийĕ—пролетарилле интернационализмăн принципĕсене пурнăçа кĕртни"

ПРАГА, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакири общественность Совет Союзне тунăранпа 30 çул тултарнине паллă тăвать. Чехословакири хаçатсем çак паллă кун ячĕпе статьясемпе информациллĕ пĕлтерӳсем пичетлеççĕ.

«Руде право» хаçат «Ленинла-сталинла нацилле политикăн аслă çĕнтерĕвĕ» ятлă статьяра коммунизм строителĕсем—Совет Союзĕнчи тăванла халăхсем политика, экономика тата культура енĕпе питĕ пысăк çĕнтерӳсем туни çинчен тĕплĕн çырать. Совет государствин шалти политики. Совет Союзĕн обществăпа государство йĕрки, тесе çырать хаçат, пролетарилле интернационализмăн принципĕсене пурнăçлани пулать. Совет Союзĕн тулашри ленинла-сталинла политики—мирпе хăрушсăрлăх, халăхсем хушшинчи пĕр танлăхпа туслăх политики, мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисен интересĕсемпе килĕшсе тăракан политика та—пролетарилле интернационализмăн принципĕсене пурнăçа кĕртни пулать. Çавăнпа та пĕтĕм этемлĕх пысăкрах пайĕ вăл политикăна ырлать.

Хаçат çакна паллă тăвать: ленинла-сталинла наци политики Чехословакири халăхсемшĕн, çĕршывра социализм ăнăçлă тăвассишĕн пыракан кĕрешӳре пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ 30 çул тултарнине палăртса, тесе çырать юлашкинчен хаçат, эпир совет халăхĕпе пĕрле, халăх демократи çĕршывĕсенчи халăхсемпе пĕрле, тĕнчери мĕнпур прогрессивлă çынсемпе пĕрле ленинла-сталинла наци политикин чаплă çĕнтерĕвне мухтатпăр. Ленинла-сталинла наци политики Совет Союзĕнче коммунизм строительствинчи ертсе пыракан аслă вăй пулса тăрать, вăл политика Чехословакири халăхсене те çул кăтартса пырать. Совет Союзĕ 30 çул тултарнине палăртса, Совет Союзĕ эпир халăхсем хушшинчи туслăхпа мир политики тытса пынине ырлатпăр. Вăл политикăн ялавне аслă Сталин тытса пырать.

„Мирпе халăхсем хушшинчи туслăхăн никам çĕнтерейми крепоçĕ"

СОФИЯ, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири мĕнпур хаçатсем паян Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне тунăранпа 30 çул тултарнине анлăн паллă тăваççĕ.

«Работническо дело» хаçат «Мирпе халăхсем хушшинчи туслăхăн никам çĕнтерейми крепоçĕ» ятлă умстатьяра çапла çырать:

Совет халăхĕ савăнса тата хăйĕн Тăван çĕршывĕпе мухтанса паян Совет Союзне тунăранпа 30 çул тултарнине паллă тăвать. Совет халăхĕпе пĕрле, хăватлă мир лагерĕ, мĕнпур прогрессивлă этемлĕх çак чаплă куна паллă тăвать. Болгари халăхĕ, социализм тăвассишĕн пыракан кĕрешӳре хăйĕн вăйне пĕрлештерсе тата Балканри мире хӳтĕленĕ çĕрте сыхă тăрса, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне тунăранпа 30 çул тултарнине чаплăн паллă тăвать.

Совет государстви наци политики енĕпе, çавăн пекех обществăпа государство пурнăçĕнче тунă çитĕнӳсене, тесе çырать «Отечествен фронт» хаçат, чи малтанах çакăнпа ăнлантарса пама пулать: Совет Союзĕ çĕнĕ йышши государство, ĕçсыннисен государстви пулса тăрать. СССР халăхсем хушшинчи пĕр танлăхпа туслăха хисеплес политика тытса пырать. Совет Союзĕн халăх массисен интересĕсемсĕр пусне урăх интересем пулман, халĕ те çук.

«Труд» хаçат умстатьяра çапла паллă тăвать: Совет Союзĕн пĕтĕм тĕнчипе паллă историллĕ опычĕпе халăх демократи çĕршывĕсем анлăн усă кураççĕ.

Румыние электрификацилени

БУХАРЕСТ, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Румыние фашистла пусмăртан ирĕке кăларичченех, 60 çул хушшинче Румынире туса лартнă электростанцисен хăвачĕ 740 пин киловатт кăна пулнă. Румынире электротехника промышленноçĕ пулман.

Халăх влаçĕ çулĕсенче, Совет Союзĕ пулăшса пынипе пула, Румынире Овидиу-2 тата Георгиу-Деж ячĕпе тăракан пысăк электростанцисем тунă, халĕ Биказере В. И. Ленин ячĕпе тăракан хăватлă гидростанци тăваççĕ. 400 яла ытла электрификациленĕ.

Электротехника промышленноçне темиçе çул каярах кăна тунă. Халĕ вăл промышленность пысăк хăвăртлăхпа аталанса пырать. Совет Союзĕн опычĕпе усă курса, Румынире хăватлă электромоторсем тата пысăк вольтлă оборудовани, çавăн пекех сăрт-ту тата нефть промышленноçĕ валли ятарласа хатĕрлекен электрооборудовани туса кăларассине йĕркеленĕ. Электротехника промышленноçĕнчи рабочисем 1952 çулхи производство планне срокчен 36 кун маларах тултарнă.

1953 çулта Румынири промышленность центрĕсенче пысăк çĕнĕ электростанцисем нумай ĕçлеме пуçлаççĕ. Çĕршыва электрификацилемелли вунă çуллăх план тăрăх 1955 çулта электростанцисен хăватне 1.700 пин киловатта çитерме палăртнă. 1960 çулта вара электростанцисен хăвачĕ 2.600 пин киловатт пулать.

ЧЕХОСЛОВАКИ ХАЛĂХ ХУÇАЛĂХĔН 1952 ÇУЛХИ ÇИТĔНĔВĔСЕМ

ПРАГА, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Пилĕкçуллăхăн вĕçленсе пыракан тăваттăмĕш çулĕнче Чехословакири ĕçсыннисем халăх хуçалăхне аталантарас çĕрте пысăк çĕнтерӳсем тунă.

Официальнăй сведенисем тăрăх, Румыни промышленноçĕн пĕтĕм продукцийĕ вăрçăччени 1937 çулхи шайран икĕ хута яхăн иртсе кайнă. Словакире уйрăмах пысăк çитĕнӳсем тунă. Унта промышленность производствин калăпăшĕ вăрçăччени шайран 4,5 хут иртнĕ.

Острава хули çывăхĕнчи Клемент Готвальд ячĕпе тăракан металлурги комбиначĕ çĕршыври чи пысăк стройкăсенчен пĕри шутланать. Ку стройкăра нумай объектсене, вăл шутра пĕр домна кăмакине, икĕ мартен кăмакине, кокс батарейине, прокатнăй цеха ĕçе янă.

Кăçал Ваг тата Хрудинка юханшывĕсем çинче икĕ гидроэлектростанци туса пĕтернĕ.

ТИБЕТРИ ÇĔНĔ ПУРНĂÇ

ПЕКИН, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Лхаса хулинчен унта пуçламăш шкул уçăлни çинчен пĕлтерет. Шкулта 500 ача ытла вĕренет. Шкулта вĕренекенсене тибет чĕлхипе кăларнă учебниксем çителĕклĕ таран илсе панă. Шкулта 20 яхăн учитель — духовнăй тата гражданла çынсем ĕçлеççĕ.

Румыни Халăх Республикине туни çинчен пĕлтернĕренпе 5 çул тултарнă ятпа Румыни Министрĕсен Советĕнче пулнă йышăну

БУХАРЕСТ, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Румыни Халăх Республикине туни çинчен пĕлтернĕренпе 5 çул тултарнă ятпа паян каçхине Министрсен Советĕнче пысăк йышăну пулнă. Йышăнура çаксем пулнă: Министрсен Совечĕн председателĕ тата Румынири рабочисен партийĕн генеральнăй секретарĕ Г. Георгиу-Деж, Аслă Наци пухăвĕн Президиумĕн председателĕ Петру Гроза доктор, Румынири рабочисен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Политбюровĕн членĕсем, Аслă Наци пухăвĕн Президиумĕн членĕсем, министрсем, стахановецсемпе производствăра малта пыракансем, наука, искусствăпа литература деятелĕсем пулнă. Йышăнура çавăн пекех Совет Союзĕн Румынири Посолĕ А. И. Лаврентьев, Китай Халăх Республикин Посолĕ Ван Ю-пин, халăх демократи çĕршывĕсен тата ытти чылай государствăсен дипломатиллĕ представительствисен пуçлăхĕсем пулнă.

Йышăну ăшшăн та туслăн иртнĕ.

Моника Фелтон каласа пани

ЛОНДОН, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). «Халăхсем хушшинчи мире тĕреклетнĕшĕн» Пĕтĕм тĕнчери Сталинла преми лауреачĕ ятне илнĕ Моника Фелтон ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă. Фелтон çакна палăртнă: халăхсен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе нумаях пулмасть Вена хулинче пулса иртнĕ Конгресĕ нумай çынсене миршĕн пыракан кĕрешĕве хутшăнтарчĕ. Çав çынсем, буржуалла хаçатсен тăшманла пропагандă влиянине кĕрсе ӳкнĕскерсем, нумаях пулмасть Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ ĕçĕ çине шанмасăр пăхнă.

Халăхсен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе пухăннă Конгресне, тенĕ Моника Фелтон, унччен Конгрессенчен чылай анлăрах никĕс çинче тунă, унăн участникĕсем вара пĕтĕм тĕнчипе мир тума чăрмантаракан йывăрлăхсене татса парас ĕç çине тимлĕ пăхнă.

Англи делегацийĕн составне, тенĕ малалла Фелтон, тĕрлĕ мировоззрениллĕ çынсем кĕнĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ, тăшманла пропагандăна ĕненсе тăрсах, Венăна кайнă. Анчах кайран вĕсем Конгресс решенийĕсене хавхаланса йышăннă, мĕншĕн тесен Конгресс организаторĕсемпе участникĕсем тӳрĕ çынсем пулнине ĕненнĕ. Делегаци членĕсенчен пĕри — лейборист, Англири пĕр хулари муниципальнăй совет членĕ, çапла каланă: Эпĕ кунтан ытларах демократиллĕ конференцисене халиччен хутшăнса курман, тенĕ.

Англири мир вăйĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен асăнса, Моника Фелтон çапла каланă: нирвайхи тата тӳрремĕнех палăракан задачăсенчен пĕри вăл Конгресс решенийĕсене пурне те пĕлтерессi пулать.

Бразилири ĕççыннисем чухăнланса пыраççĕ

МОНТЕВИДЕО, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Бразили правительстви, Америка монополисчĕсене юрама тăрăшса, васкаса хĕçпăшалланас политика тытса пырать. Çак политикăна пула ĕççынни массисен пурнăçĕ начарланнăçемĕн начарланать. Ĕççĕр пурăнакансен хисепĕ, тавар хакĕсем, налогсем ӳсеççĕ, ĕççыннисем чухăнланса пыраççĕ. Бразилири ĕççыннисем 1952 çула çакăн пек начар итогсемпе вĕçлеççĕ ĕнтĕ.

«Импренса популар» хаçат декабрĕн 3-мĕшĕнче çапла çырнă: кризис вăйланса пынине пула, ĕç тупайман çынсен хисепĕ ӳсет. Сан-Паулора, çĕршывăн промышленноçлă пысăк центрĕнче, Америкăн каучук изделийĕсем тăвакан предприятисенчи рабочисене 1952 çулта ушкăнĕ-ушкăнĕпе ĕçрен кăларса янă.

Пир-авăр промышленноçĕнче ĕçрен кăларса янă çынсен хисепĕ мĕнпур рабочисен хисепĕнчен 20 процента яхăн пулать. «Импренса популар» хаçат çырнă тăрăх, Паулиста хулинче (Пернамбуко штачĕ) Линдгрен пир-авăр фабрикинче кăна 8 пин рабочи ĕçрен тухса каяс хăрушлăх умĕнче тăрăççĕ.

«О популар» хаçат çапла пĕлтернĕ: 1951 çулхи октябрь уйăхĕнчен пуçласа 1952 çулхи октябрь уйăхĕччен сахăр хакĕ 30 процент, çĕрулми хакĕ—36 процент, аш-какай хакĕ—80 процент, фасоль хакĕ—84 процент, вир хакĕ 60 процент ӳснĕ.

Çĕршывра налогсем, уйрăммăнах потреблени таварĕсем çине хуракан налогсем хăвăрт ӳсеççĕ. «Конжунтура экономика» журнал çырнă тăрăх, 1951 çулта пухнă налогсем государство бюджетĕнчи мĕнпур тупăшсен 76,6 проценчĕ чухлĕ пулнă. 1953 çул валли йышăннă государство бюджетĕнче çав укçа-тенкĕ хисепĕ 79 процента çити ӳснĕ.

«Ултима Ора» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Бразилире кашни 10 пин çын пуçне пĕр медпункт кăна тивет. Натал хулинче çуралакан пин ачарач 403 ача вилет. Штатсен çичĕ столицинче, вăл шутра Рио-де-Жанейро хулинче, çынсем туберкулезпа чирлесе уйрăмах нумай вилеççĕ. Конгресс депутачĕ Лоуро Крус каланă тăрăх, Бразилире çапкаланса çӳрекен ачасем 2 миллион çынна яхăн шутланаççĕ.

Хаçатсем пĕлтернинчен çакă паллă: 1953 çулта Бразилири ĕççыннисем «çĕнĕ йывăрлăхсемпе тĕл пулаççĕ». Вăл йывăрлăхсем налогсем, таварсен хакĕсем ӳснинчен килеççĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Халăх çарĕн тата Китай халăх добровольцĕсен соединенийĕсем тăшмана хирĕç унччен вырăнсенчех оборонăра тăрса çапăçнă.

Ĕнер çĕрле Америка самолечĕсем Пхеньян çывăхĕнчи мирлĕ халăх пурăнакан ялсем çине, унта нимĕнле çар объекчĕсем çук пулин те, вĕçсе пынă, тискеррĕн бомбăсем пăрахнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтакĕсем паян тăшманăн 3 самолетне персе ӳкернĕ.

Тунисра патриотсене тытса хупаççĕ

ПАРИЖ, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). «Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Тунисра пурăнакансене каллех арестленĕ. Уйăрăммăн илсен, Франци полицийĕ Сфаксра 19 çынна, Сус хулинче—9 çынна, Габесра—9 çынна, Матэра хулинче 6 çынна арестленĕ. «Çынсене вĕлерме хĕтĕртнĕшĕн» айăпласа арестленĕ патриотсем хушшинче нацин никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешекен вырăнти профсоюз организацисемпе партисен руководителĕсем пур.

Сирири лару-тăру пирки

СТАМБУЛ, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Ливанри «Аттайар» хаçат çапла пĕлтернĕ: Сири çарĕнчи офицерсен чылай пысăк ушкăнĕ, вице-премьер-министр тата генеральнăй штаб начальникĕ Шишекли полковник Каир хулине тухса кайнипе усă курса, çĕршывра каллех государство переворочĕ тума хăтланнă. Государство переворочĕ тума хатĕрленни çинчен пĕлсен, Шишекли васкасах Дамасск хулине таврăннă. Нумай çынсене арестленĕ.

Ливанри «Ас-Сарха» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, арестленĕ çынсем хушшинче Сири çарĕн генеральнăй инспекторĕ Аднан Мальки тата хăшпĕр аслă офицерсем пур. Çав çынсем маларах салатса янă политикăллă партисемпе, уйрăммăн илсен, Англи майлă ĕçленĕ «Аль-Баас» ятлă партипе çыхăннă пулнă.

ПАРАГВАЙРА МИРШĔН ТĂРАКАНСЕНЕ АРЕСТЛЕÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Гаванăри «Нотисиас де ой» хаçат Асунсионран (Парагвай) илнĕ çакăн пек хыпара пĕлтернĕ: Парагвайри паллă деятельсен ушкăнне лару пынă вăхăтра арестленĕ. Вăл ларура мире хӳтĕлес тĕлĕшпе иртттерекен конференци пухасси çинчен тăракан ыйтăва сӳтсе явнă пулнă. Хаçат кăтартса панă тăрăх, арестленĕ деятельсенчен нумайăшне асаплантарнă, ун хыççăн вĕсене Чако районĕнчи концентрационнăй лагере илсе кайнă.

Арестленисем хушшинче — Латинла Америкăри пĕр институт директорĕ Сигизмундо Вильягра доктор, симфониллĕ оркестр дирижерĕ Карлос Лара, профессор Агустина Мора госпожа тата ыттисем те пур.

Шалти ĕçсен министрĕ Ароча Граэль арестленĕ деятельсен тăванĕсен ушкăнне çапла пĕлтернĕ: деятельсене арестлени тата концентрационнăй лагерь туни ытти çĕршывсем умĕнче илнĕ обязательствăсемпе çыхăнса тăрать. Вăл обязательствăсене Парагвай Америкăри çĕршывсен конференцийĕсенче,—Америкăри çĕршывсен хăрушсăрлăхне тăвасси çинчен текен ыйту тăрăх иртттернĕ конференцисенче йышăннă.

Хаçат малалла çапла пĕлтерет: миршĕн тăракансене арестленине хирĕç протестлесе Асунсионра демонстраци пулса иртнĕ.

АМЕРИКА ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИРЕ ÇАР БАЗИСЕМ ТĂВАТЬ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС) «Свенска дагбладет» хаçатăн спецкорĕ Том Селандер Хĕвеланăç Германири Кайзерслаутерн хулине пырса кайнă. Том Селандер çапла çырать: американецсем çак хула районĕнче пысăк база тăваççĕ. Унта 20 уйăх хушши ĕнтĕ 40 пин нимĕç рабочийĕсем кăнтăрла та çĕрле те ĕçлеççĕ. Казармăсем, аэродромсем, çар хатĕрĕсем хумалли складсем тăваççĕ.

Американецсем вăйпа пăхăнтарнине палăртса, корреспондент çапла çырать: Кайзерслаутерн районĕ Франци çарĕсем оккупацилесе тăракан зонăра пулин те, Америкăн çар влаçĕсем кунта хăйсене питех те ирĕклĕн тыткалаççĕ... Хула та нимĕç хули пек мар, ытларах Америка хули пек туйăнать.

Англире миршĕн тăракансене хĕсĕрлеççĕ

ПАРИЖ, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчĕ Лондонран çапла пĕлтерет: халăхсен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе пухăннă Конгресĕн ĕçне хутшăннăшăн лейбористсен партийĕн Пенджери (Кент) организацийĕн членне Дж. Уилсон Формера тата Галифаксри (Йоркшир графстви) организацийĕн секретарьне Ирен Уорн госпожана лейбористсен партийĕнчен кăларнă.

Электромеханически техникумра

Шупашкарти электромеханически техникумăн аудиторийĕсемпе кабинечĕсенче яланах студентсем йышлăн пулаççĕ. Вĕсем электротехника никĕсĕсене, çĕнĕ машинăсемпе станоксене вĕренеççĕ, çĕршыври фабрикăсемпе заводсенче, пысăк стройкăсенче ăста специалистсем пулса ĕçлеме хатĕрленеççĕ. Вĕренекенсем валли лайăх условисем туса панă.

Техникум 1945 çултанпа ĕçлет. Çак вăхăтра техникумран 300 студент ытла вĕренсе тухнă. Халĕ вĕсем Мускаври, Ленинградри, Ригăри тата ытти хуласенчи предприятисенче, коммунизмăн аслă стройкисенче ĕçлеççĕ. Хальхи вăхăтра техникумра студентсем татах нумай вĕренеççĕ.

1953 çула студентсем вĕренӳре çĕнĕ ӳсĕмсем тунипе кĕтсе илчĕç. Юлашки вăхăтра отличниксен йышĕ нумайланчĕ, вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайман студентсен хисепĕ сахалланчĕ. Çак кунсенче I—III-мĕш курссенчи студентсем экзаменсем пама тытăнчĕç. Вĕсем электротехника, машиноведени, металсене касма вĕрентекен предметсемпе экзаменсем тытрĕç. Студентсем нумайăшĕ вĕренӳре тарăн пĕлӳ илнине кăтартаççĕ, кăткăс машинăсемпе, станоксемпе тата электроаппаратурăпа хăйсем тĕллĕнех ĕçлеме пултараççĕ. Уйрăмах виççĕмĕш «М» курсра вĕренекен студентсем пысăк пĕлӳ илнĕ. Çак курсра вĕренекенсем экзаменсенче «5» тата «4» паллăсем кăна илеççĕ.

1952 çулта техникум çумĕнче каçхи уйрăм ĕçлеме тытăннă. Унта Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри рабочисем 30 çын ытла вĕренеççĕ. Вĕсем заводра ĕçленĕ вăхăтрах каçхи уйрăмра вĕренсе хăйсен квалификацине ӳстереççĕ.

Тăрăшса вĕренесси, культурăллă канасси студентсен кулленхи йăлине кĕнĕ. Техникумра ăста юрлакансем, ташлакансем, хĕлĕхлĕ инструментсемпе вылякансем нумай. Вĕсене художество пултарулăх кружокĕсенче ĕçлеме хутшăнтарнă. Хальхи вăхăтра техникумра драма кружокĕ, хĕлĕхлĕ инструментсен оркестрĕ тата ытти кружоксем ĕçлеççĕ. Художествăллă пултарулăх коллективĕн вăйĕпе студентсем валли концертсем, литература каçĕсем тăтăшах иртттереççĕ. Халĕ кружоксем Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри суйлавçăсем валли пысăк концерт пама хатĕрленеççĕ.

Студентсен вĕренĕвĕнче техникумри библиотека пысăк пулăшу парать. Библиотекăра политикăллă, художествăллă литература, техника çинчен çырнă кĕнекесен хисепĕ çулленех нумайланса пырать. Вулакансен йышĕ те пысăк. Студентсем каçсерен вуламалли зала йышлăн çӳреççĕ. Пĕлтĕр библиотекăра икĕ хутчен вулакансен конференцине ирттернĕ. Студентсем çак конференцисенче вырăс классикĕсен, совет писателĕсен кĕнекисене сӳтсе яваççĕ. хăйсен шухăшкăмăлĕсене каласа параççĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: II-мĕш курсра вĕренекен студент-отличник Вадим Степанов (сылтăмри) механика предмечĕпе экзамен парать. Сулахайра—техникумри механика преподавателĕ Н. П. Тигер тата вĕренӳ пайĕн заведующийĕ Н. Л. Леонтьев.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Н. А. Некрасов сăввисем чăвашла

Вырăссен аслă писателĕсен — А. С. Пушкин, М. Ю. Лермонтов, Н. В. Гоголь. Н. А. Некрасов, Л. Н. Толстой, А. М. Горький ячĕсем пирĕн вулакансемшĕн чи паллă та çывăх ятсем пулса тăраççĕ.

Николай Алексеевич Некрасов сăввисем чăвашла революциччен те пичетленсе тухкаланă пулнă. Унăн пĕр юррине 1900 çулта чăвашла куçарса «Чăваш кĕнеки» («Букварь для чуваш с присоединением русской азбуки», изд. 14, стр. 41) ятлă кĕнекере пичетлесе кăларнă. Вырăс хресченĕн чухăн пурнăçĕ çинчен калакан сăвă чăваш чухăн хресченсемшĕн çывăх та ăнланмалла пулнă.

Н. А. Некрасов сăввисене пирĕн писатель-классик К. В. Иванов та питĕ юратса вуланă, унтан çырма, халăх шухăшкăмăлне каласа пама вĕреннĕ. 1907 çулта Иванов Некрасовăн «Кому на Руси жить хорошо» поэмин икĕ сыпăкне чăвашла куçарнă.

Некрасов сăввисене чăвашла пуринчен ытла совет саманинче нумай куçарнă, куçараççĕ те. Пичетленсе тухнисенчен çаксене асăнмалла: «Вăрман касни» тата «Пĕчĕк хресчен» (Чăваш халăх поэчĕ Н. И. Шелепи куçарнă, 1925—1926 ç. ç.), «Мăнă ял» (1923 çулта Хумма Çеменĕ куçарнă), «Кама лайăх пурăнма Русь çĕрĕнче» поэмăн прологĕ (1938 ç. А. Эсхель куçарнă) т. ыт. те.

Уйрăм кĕнекен тухнисем: «Генерал Топтыгин» (1939 ç.), «Сăвăсемпе поэмăсем» (1947 ç.), «Атăл çинче» (1951 ç.).

Вĕсемсĕр пуçне Н. А. Некрасовăн уйрăм сăввисем кашни çулах шкулта вĕренмелли кĕнекесенче те пичетленсех тăраççĕ.

Выляв ӳкçи илеççĕ

Шупашкарти перекет кассисем декабрĕн 22—25-мĕшĕсенче государство заемĕн облигацийĕсем тăрăх 743 çынна 266 пин тенкĕ выляв укçи тӳленĕ.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри А. Николаева работница СССР халăх хуçалăхне аталантармалли заем (1951 çулхи кăларăм) облигацийĕпе 25 пин тенкĕ выляса илнĕ. Çак заводри В. Мухлынин рабочи 5 пин тенкĕ выляв илнĕ.

Заем облигацийĕсем тытакансенчен нумайăшĕ 200-шер тата пиншер тенкĕ выляса илнĕ.

П. ЕФИМЕНКО.

ЛЕКЦИ-КОНЦЕРТ ПУЛЧĔ

Çак кунсенче Чăваш педагогика институтĕнче Сталинла премi лауреачĕ, Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Ф. М. Лукин композитор вырăссен чаплă композиторĕ П. И. Чайковский пурнăçĕпе творчестви çинчен лекци вуласа пачĕ. Ун хыççăн Чăваш государство филармонийĕн артисчĕсем П. И. Чайковский çырнă «Евгений Онегин», «Пиковая дама» оперăсен сыпăкĕсене юрласа пачĕç.

Студентсем лекци-концерта пысăк тимлĕхпе итлерĕç.

В. ШАЛТАЙКИН.

Театр

Çĕнĕ спектакльсем

Декабрĕн 27—28-мĕшĕсенче Чăваш академи театрĕн коллективĕ Г. Мухтаров çырнă «Çемье чысĕ» ятлă пьесăна сцена çинче кăтартма тытăнчĕ.

Постановкăна çамрăк актриса З. Д. Ярдыкова хатĕрленĕ. Ку постановка вăл режиссерсен курсĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн хатĕрленĕ малтанхи постановка пулчĕ.

Спектакльти тĕп рольсене—Чăваш АССР халăх артисчĕ А. Угралкин, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕсем А. Долгова, И. Молодов, Л. Семенов тата А. Бубнов, Е. Никитин, Т. Евсеева, Е. Степанова, Т. Егорова артистсем выляççĕ.

Куракансем спектакле ырласа йышăнчĕç.

* * *

Çамрăксен театрĕ А. Островскин «Бедность не порок» ятлă комедине лартса пама тытăнчĕ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

«РОДИНА» КИНОТЕАТРТА

Шкул ачисен хĕллехи каникулĕ вăхăтĕнче 12 сехетре тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче çак кинокартинăсене кăтартаççĕ:

Январĕн
1-мĕшĕнче—«Академик Павлов».
2-мĕшĕнче—«Красный галстук».
3-мĕшĕнче—«Детство Горького».
4-мĕшĕнче—«Поединок».
5-мĕшĕнче—«Адмирал Нахимов».
6-мĕшĕнче—«Василиса прекрасная».
7-мĕшĕнче—«Суворов».
8-мĕшĕнче—«Секретарь райкома».
9-мĕшĕнче—«Дети капитана Гранта».
10-мĕшĕнче—«Валерий Чкалов».
11-мĕшĕнче—«По щучьему велению».

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Паян, январĕн 1-мĕшĕнче, кăнтăрла та, каçхине те вырăсла спектакль
«ЗЕМНОЙ РАЙ»
Ыран, январĕн 2-мĕшĕнче, каçхине—чăвашла спектакль
«ÇЕМЬЕ ЧЫСĔ»
Шăматкун, январĕн 3-мĕшĕнче, кăнтăрла та каçхине те вырăсла спектакль
«ДЕВИЦЫ-КРАСАВИЦЫ»
Кăнтăрлахи спектакльсем 12 сехетре, каçхи спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь — 4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01204 Типография №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.